Чебоксарская
Ц. Б. им. Горького
0

1937
ДЕКАБĔР
21
ЫТЛАРИКУН
292 (4804)-мĕш №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммунĕ

19-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăран 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Мускаври тата Мускав облăçĕнчи фабрикăсемпе заводсенчи стахановецсем чĕнсе калани

Промышленнăçпа транспортри мĕн пур стахановецсене, рабочисене, инженерсене, техниксене тата служащисене

Хаклă йулташсем!

Совет халăхĕ декабрĕн 12-мĕшĕнче пĕтĕм тĕнчери чи демократилĕ Сталинла Конституци тăрăх ССР Союзĕн Аслă Советне суйларĕ.

Коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕ, хăватлă, никам çĕнтерейми Сталинла блок, чаплă çĕнтерÿ турĕ. Совет Союзĕн аслă органне суйлама большевиксен партийĕпе партире тăманнисен суйлав блокĕ палăртнă кандидатсем пур çĕрте те суйланнă.

90 миллион ытла суйлавçăсем, коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăласа, совет халăхĕ большевиксен партийĕ тавра пĕтĕçнине, хăйсем Ленин—Сталин партине вĕçĕмсĕр шаннине тата йуратнине, хăйсем аслă Сталина йуратнине тата унпа тăрăçнине демонстрацилерĕç.

Пирĕн тăван çĕршывăн ĕççыннисем Ленинăн—Сталинăн аслă йалавĕ айĕнче коммунисăмăн çĕнĕ çĕнтерÿвĕсем патне шанчăклăн малала пыраççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем хăйсене ĕçлĕ етемлĕхĕн аслă генийĕ Сталин йулташ йертсе пынине пĕлеççĕ, вăл йертсе пынипе пирĕн çĕршыв хăватлă социалисăмла державă, çĕнтернĕ социалисăм çĕршывĕ, телейпе савăнăç çĕршывĕ, социалисăмла демократийе çарса йанă çĕршыв пулса тăчĕ.

Пирĕн тăван çĕршыв-анне—тĕнчере ĕççĕрлĕх хăрушăлăхне пĕлмен пĕртен-пĕр çĕршыв. Еççĕрлĕхе ĕмĕрлĕхех тĕп тунă тата унăн инкек-синкекĕсене социалисăм çĕршывĕн гражданинĕ нихăçан та пĕлмĕст. Колхоз стройĕ йалта çуклăха ĕмĕрлĕхех тĕп туса колхоз хресченĕсене телейлĕ те пуйан пурнăç туса пачĕ.

Ленин—Сталин партийĕпе Совет влаçĕ пирĕн тăван çĕршывăн ĕççыннисене ĕçлев прави, канăç прави, вĕренÿ прави, ватăлсан пурăнмалăх пулăшу илмелли права пачĕç, вăл правасене Сталинла Конституци çине ылттăн сăмахсемпе çырса хунă.

Партин Сталинла Тĕп Комитечĕпе Совет правителстви рабочисен, хресченсен тата ĕçлĕ интеллигенцин пурнăçне тата ытларах лайăхлатассишĕн пĕр ывăнмасăр тăрăшаççĕ.

Епĕр хамăр ваççи ĕçлетпĕр, çавăнпа та пирĕн ĕç савăнăçлă. Епĕр пĕлетпĕр, епĕр мĕн чухлĕ ытларах продукци туса кăларатпăр, епĕр хамăрăн колхозсемпе совхозсен уй-хирĕсенчен мĕн чухлĕ ытларах тырпул туса илетпĕр, пирĕн тăван çĕршыв çавăн чухлĕ хăватлăрах пулать, çавăн чухлĕ епĕр лайăхран та лайăхрах пурăнатпăр.

Совет халăхĕ хăйĕн аслăрах та аслă хăватне, хăйĕн моралĕ тата политикăлă никам çĕмĕрейми пĕрлĕхне, Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе, аслă Сталин йертсе пынипе хăйĕн тăван çĕршывне тĕреклĕтессишĕн, коммунисăмăн çĕнĕ çĕнтерÿвĕсемшĕн кĕрешме хатĕр тăнине пĕтĕм тĕнчере нихăçан курман вăйпа демонстрацилерĕ.

Аслă Совет суйлавĕ чăннипех пĕтĕм халăх праçникĕ пулчĕ. Вăл историлĕ кунна Мускаври тата Мускав облăçĕнчи предприйатисенчи ĕççыннисем, рабочисем, ударниксемпе стахановецсем политикăлă тата производствăлă активлăхĕн нихăçан курман çĕкленÿвĕпе кĕтсе илчĕç. Çав политикăлă тата производствăлă активлăха палăртакани—столицăри Сталинский районĕнчи рабочисем пуçарнипе иртĕрнĕ стахановла рекордсен сталинла декади пулать.

Вăл декадă кунĕсенче Сталин пăхса ÿстерне пиншер çынсем—стахановецсем, пирĕн телейлĕ тăван çĕршывăн сулăмлă патриочĕсем пысăк ĕç тухăçлăхĕшĕн большевикла кĕрешнĕ çĕрте чаплă тĕслĕхсем кăтартрĕç, ĕç çине социалисăмла пăхмали тĕслĕхсене кăтартрĕç, техникăна-алла çавăрса илнĕ çынсем, хăйсен тăван çĕршывне хĕрÿлĕн йуратакан çынсем, Ленинла ăмăрту йалавне çÿле çĕклекен çынсем мĕнле паттăрла ĕçсем тума пултарнине кăтартрĕç.

ССР Союзĕн Аслă Совет депутачĕ Серго Орджоникидзе йачĕпе тăракан станоксем тăвакан заводăн фрезеровщикĕ Гудов йулташ сталинла декадă кунĕсенче пĕр сменăра 45,8 нормă тултарса, чаплă рекорд турĕ.

„Красный пролетарий“ заводри унпа ăмăртакан фрезеровщик Царев йулташ, Гудов меслечĕпе ĕçлесе, сменăра 58 нормă тултарса, çав рекордран иртерчĕ.

Сталинла декадă кунĕсенче Мускав хулинчи тата Мускав облăçĕнчи предприйатисенче пысăк ĕçтухăçлăхĕн çĕнĕ паллă мастăрĕсем ÿссе ситĕнчĕç.

Панфилова йулташ, Тушинори чăлха çыхакан фабрикăри стахановкă, пĕр сменă хушшинче 1.140 мăшăр чăлха çыхса, Америкăри нормăсенчен иртерсе, пĕтĕм тĕнчери рекорд турĕ.

„Красный пролетарий“ заводри фрезеровщик Миронов йулташ сменăра 46 нормă тултарнă.

Подольскри механически заводăн резецсене хăйракан Анисимов сменăра 17 нормă тултарнă.

Мытищинскри машинăсем тăвакан заводри комсомолец Крац йулташ сменăра 18,3 нормă тултарнă.

Горбунов йачĕпе тăракан заводри стахановецсем Лукйановскипе Никулин йулташсем пĕр сменăра уйăхри заданийе пурнăçа кĕртнĕ.

„Серп и молот“ заводри хурçă шăратакан Дронников йулташ пĕр тăваткăл метр кăмака тĕпĕнчен 11 тоннă хурçă шăратса кăларнă.

Мускаври тата Мускав облăçĕнчи заводсенче хăйсен нормисене 500 тата 1.000 процент тултаракан пйатисотниксемпе тысячниксен мухтавлă йухăмĕ, стахановецсен йухăмĕ сарăлма пуçларĕ.

Коломнăри Куйбышев йачĕпе тăракан заводра сталинла декадă кунĕсенче 304 стахановец хăйсен нормисене 500 процент ытла тултарнă.

Ленсе йачĕпе тăракан заводра сталинла декадă кунĕсенче 690 рекорд тунă. Ку заводри 180 рабочи хăйсен нормисене 300 процентран пуçласа 1.180 процент таран тултарнă.

Кун пек тĕслĕхсем нумай. Вĕсем Сталин йачĕпе тăракан автозаводра, Каганович йачĕпе тăракан прожектор заводĕнче Куйбышев йачĕпе тăракан електрозаводра, станоксем тăвакан „Комсомолец“ заводра, Подольскри механически заводра тата ытти нумай предприйатисенче те пур.

Çĕршер предприйатисенче малтан нормăсене тултараймаи рабочисем халĕ нормăсене тултарма пуçланă. Нормăна 120—150 процент тултаракан ударниксен йышĕ ÿсрĕ.

Сталинла декадăн мĕн пур çитĕнÿвĕсем, тунă рекордсем пурте ĕçтухăçлăхне вĕçĕмсĕр ÿстерме май пуррине тата социалисăмлă промышленнăçăн резервисем питĕ пысăккине уççăн кăтартса параççĕ, вĕсемпе усă курасси хуçайственниксен, инженерсен, рабочисен, стахановецсен чи кирлĕ задачи пулать.

Задачă—сталинла декадăра тунă ĕçтухăçлăхĕн виçине çирĕплетсе хăварассинче пулать.

Задачă — уйрăм стахановецсен пысăк ĕçтухăçлăхне бригадăсене, цехсене куçарассинче пулать.

Задачă—малта пыракансен опытне тăтăшах сарассинче тата унпа усă курассинче, ăна пулăшакан майсене туса парассинче пулать.

Йулташсем, пирĕн çĕршыв мухтавлă сталинла иккĕмĕш пйатилеткăна вĕçлесе ситерсе виççĕмĕш пйатилеткăн пĕррĕмĕш çулне кĕрет.

Çĕнĕ хуçалăх çулĕ умĕн епĕр сире, рабочисем, работницăсем, стахановецсем, инженерсем тата хуçайственник йулташсем, государствăн кăçалхи планне тултарассине ăнăçлăн вĕçлесе çитерме, 1938 çулта—сталинла виççĕмĕш пйатилеткăн пĕррĕмĕш çулĕнче промышленнăç производствин планне пурнăçа кĕртме кăтартулăн хатĕрленме чĕнетпĕр.

Епĕр сире 1938 çулта социалисăмлă ĕçĕн чаплă тĕслĕхĕсене кăтартма чĕнетпĕр.

Епĕр сире 1938 çула социалисăмлă ăмăртуван тата стахановла йухăнмăн çĕнĕ хăватлă çĕкленÿ çулĕ, ĕçтухăçлăхĕн чи çÿлĕ кăтартăвĕсен çулĕ тума чĕнетпĕр.

Епĕр сире çĕнĕ хуçалăх çулне 1938 çулхи йанвар уйăхне стахановла рекордсен сталинла уйăхĕ туса кĕме чĕнетпĕр, вăл уйăхра социалисăмла организацилĕхĕн тата большевикла йĕркелĕхĕн тĕслĕхĕсене кăтартса, пĕр пек, пĕр чарăнса тăмасăр тата штурмовщинăсăр ĕçлеме пĕлнине кăтартма чĕнетпĕр.

Епĕр сире фабрикăсен, заводсен, шахтăсен, рудникĕсен, паровоз деповĕсен, тукунçул станцисен социалисăмлă ăмăрту йалавне тата çÿлерех çĕклеме, стахановла йухăма анлăрах та тарăнрах сарса йама тата малта пыракансен хисеплĕ йачĕшĕн, кусса çÿрекен хĕрлĕ йалавсемшĕн, социалисăмла ăмăрту отличникĕсен йачĕшĕн большевикла кĕрешме чĕнетпĕр.

Епĕр сире революцилĕ большевикла сыхăлăха тата çÿлерех çĕклеме, халăхăн ылханла тăшманĕсене—йапон-нимĕç фашисăмĕн троцкисла-зиновйевла тата бухаринла-рыковла тарçисене пĕр хĕрхенÿсĕр тăрă шыв çине кăларса пĕтерсе хума чĕнетпĕр.

Епĕр сире пирĕн тăван коммунисла парти тавра, пирĕн аслă çулпуç тата учител, аслă Сталин тавра тата таччăнрах пĕтĕçме чĕнетпĕр.

Епĕр сире совет халăхĕн никам çĕмĕрейми моралĕ тата политикăлă пĕрлĕхне, коммунистсемпе партире тăманнисен никам çĕнтерейми блокне тĕреклетме чĕнетпĕр.

Сывă пултăр пирĕн социалисăмлă аслă тăван çĕршыв!

Сывă пултăр Пĕтĕм Союзри Коммунистсен большевиксен партийĕ!

Сывă пултăр хăватлă стахановла йухăм!

Сывă пултăр пирĕн çулпуç тата учител Сталин йулташ!

ССР Союзĕн Аслă Совечĕн пĕррĕмĕш Çессине пухасси çинчен

ССР Союзĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕ йышăннă постановлени

ССР Союзĕн Конституцин 55-мĕш статйи тăрăх, ССР Союзĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕ çапла йышăнать:

Советлă Социалисăмлă Республикăсен Союзĕн Аслă Совечĕн пĕррĕмĕш Çессине 1938 çулхи йанварĕн 12-мĕшĕнче Мускав хулинче пухас.

ССР Союзĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ—**М. КАЛИНИН.**

ССР Союзĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет секретарĕ—**А. ГОРКИН.**

Мускав, Кремĕл.
1937 çулхи декабрĕн 19-мĕш.

Коммунисăм çĕнтерÿвĕшĕн пĕтĕм вăйа хуратăп

ПАТĂРЙЕЛ, декабрĕн 20-мĕш. („Чăваш Коммунĕ“ корр.). Аслă Совет депутачĕ Ольга Тихоновна Харитонова йулташ пайан Патăрйелĕнчи „Октябĕр йалавĕ“ хаçат редакцине çакăн пек çыру йачĕ:

„Ĕнер çеç епĕ культурă фронтĕнчи пуринпе пĕр пек работницăччĕ, акă пайан, епĕ Аслă Совет депутачĕ. Ку савăнăçа халăх çав тери мана чысланине каласа пама сăмах та тупаймастăп. Пирĕн Аслă çĕршыври паттăр халăх тата Ленин—Сталин партийĕ мана государствăна йертсе пырас ĕçе шанса пачĕç. Епĕ Аслă Совет ларăвĕнче тăван çĕршыври пур паттăр çынсемпе пĕрлех государствă ĕçĕсене сÿтсе-йавма телейлĕ пултăм. Çакă вăл халăх шанăçĕ. Халăх шанăçĕнчен хакли маншăн урăх нимĕн те çук. Çакăншăн суйлавçăсене большевикла тав тăватăп.

Епĕ халăх хушшинчен тухнă çын. Манăн—коммунистсен парти членĕн, халăх интересĕсĕр пуçне урăх нимĕнле интерес та çук. Хамăн пĕтĕм вăйа, пултарулăха халăх ĕçне, коммунисăм çĕнтерĕвĕн ĕçне паратăп. Сталин йулташ,—депутатсем хăйсен задачисен çулĕ çинче пулччăр, вĕсем хăйсен ĕçĕсенче политикăла обывателсен картне анса ан ларччăр. Вĕсем Ленин сăнарлă политикăлă дейателсен ырăнче тăччăр, вĕсем Ленин пекех йар уçă та паллă дейателсем пулччăр, вĕсем Ленин пекех кĕрешÿре вилĕмрен хăраман тата халăх тăшманĕсене нимĕн хĕрхенмен çынсем пулччăр, тени Сталин йулташăн тата ытти кăтартăвĕсем те маншăн ĕç программи пулса тăраççĕ.

Сталин йулташ—„депутат вăл халăх тарçи, Аслă Совета халăх йанă посланец, унăн хăйне халăх панă наказ тăрăх тытса пымала“ тесе кăтартса панине йаланах тата пур çĕрте те вырăна кĕртсе пыратăп.

Пĕтĕм халăхпа пĕрле большевикла парти тата Аслă Сталин йертсе пынипе епĕ, Аслă Совет депутачĕ, халăх ĕçĕшĕн, коммунисăм çĕнтерĕвĕшĕн хамăн пĕтĕм вăйа хуратăп.

Аслă Совет депутачĕ
О. Т. Харитонова.

3 пинлĕ митинг

СĔНТĔРВĂРРИ. ССР Союзĕн Аслă Совет суйлавĕ ăнăçлăн иртнишĕн савăнса районра ĕççыннисен демонстрацийĕсемпе митингĕсем пулса иртеççĕ. Декабрĕн 16-мĕшĕнче Сĕнтĕрвăрри хулинчи ĕççыннисен пысăк митингĕ пулчĕ. Кăнтăрла иртсен 4 сехетре хулари кашни урамранах предприйатисемпе учреждениссенчĕ ĕçлекенсем, техникумсенче, шкулсенче вĕренекенсем хĕрлĕ йалавсемпе, аслă Сталинпа унăн чи çывăх йулташĕсен: Молотов, Калинин, Ворошилов, Каганович, Йежов, Микойан, Литвинов, Жданов, Чубарь тата ытти йулташсен портречĕсене çĕклесе телейлĕ пурнăç çĕнтерÿ йуррисене йурласа ПСК(б) Парти райкомĕ тĕлне пухăнчĕç.

Митинга хула совет председателĕ Саначин йулташ уçрĕ те, ПСК(б)П райком йачĕпе ĕççыннисене саламлама Жирнов йулташа сăмах пачĕ. Жирнов йулташ ĕççыннисене суйлавра коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕ çĕнтерни çинчен, иртнĕ суйлав ССР Союзĕнчи халăхсем хăйсен тăван çĕршывне, Ленин—Сталин партине, пирĕн çулпуçа аслă Сталин йулташа пĕтĕм чĕререн, вĕçĕ-хĕррисĕр йуратнине кăтартни çинчен каласа пачĕ.

Сывă пултăр халăхсен çулпуçĕ аслă Сталин!

Сывă пултăр коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕ, союзĕ! „Урра“, „урра“—тесе кăшкăрни, „Интернационал“ йурлани йанраса кайать. Кашни çын коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕ, союзĕ çĕнтернишĕн, Аслă Совет суйлавĕ етем историйĕ курман хăватпа иртнишĕн хĕпĕртесе савăнать. Унтан хула совет председателĕ Саначин митинг хупăнни çинчен пĕлтерсен, ĕççыннисем хĕрлĕ йалавлă колоннисем урамсем тăрăх хаваслă йурăсем йурласа саланчĕç. Сĕнтĕрвăрринчи декабрĕн 16-мĕшĕнче пулнă митингра пурĕ виçĕ пин çын ытла пулчĕ.

В. Василйев.

Хосе Диаспа Долорас Ибаррури. (Союзфото).

ВЧК—ОГПУ—НКВД çирĕм çул тултарнă тĕле

ВЧК—ОГПУ—НКВД çирĕм çул тултарнă кун ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ—шпионажпа, сăтăрланипе, диверсипе кĕрешнĕ çĕрте хăйсен тивĕçне совет халăхĕ умĕнче тÿрĕ те хăйулăн пурнăçа кĕртекен Шалти ĕçсен халăх комиссариачĕн работникĕсемпе бойецĕсене хĕрÿлĕн саламлаççĕ.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ Шалти ĕçсен халăх комиссариачĕн работникĕсемпе бойецĕсене, халăх тăшманĕсене тĕпĕ-тымарĕпех пĕтерес тĕлĕшпе хăйсен ĕçĕнче çитĕнÿсем тума сунаççĕ.

Сывă пултăр Шалти ĕçсен халăх комиссариачĕ—совет халăхĕн тăшманĕсене пĕтерекен аллийĕ!

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ.
ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ.

Шалти ĕçсен Халăх Комиссариатне—Н. И. Йежов йулташа

ВЧК—ОГПУ—НКВД çирĕм çул тултарнă кун Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн бойецĕсен, командирĕсен тата политработниксен йачĕпе Шалти ĕçсен халăх комиссариачĕн мĕн пур работникĕсене—мухтавлă рйадовой чекистсене, вĕсен командирĕсемпе начальникĕсене хĕрÿлĕн саламласа сывлăх сунатăп.

Ленин—Сталин партийĕ пăхса ÿстернĕ тата парти йертсе пыракан герой-чекистсем совет чиккисемпе пирĕн халăхăн мирлĕ ĕçне хÿтлемелли çапăçулă йалава çÿлте тытса пыраççĕ. ВЧК—ОГПУ—НКВД çирĕм çул тултарни вăл—халăхăн тĕрлĕ тĕслĕ тăшманĕсене, пирĕн пата йутçĕршывсенчен йанисене те, хамăр çĕршыври çапса салатнă тата пăчланнă експлоататорла классен йулашкийĕсем çуратса кăларнисене те, çирĕм çул хушши кĕрешсе çĕнтерсе пыни пулать.

Сире, йулташсем, пирĕн аслă тăван çĕршыва ырлăх тăвасшăн, социалисăма ырлăх тăвасшăн тăрăшакан хăвăрăн çăмăл мар, анчах хисеплĕ те мухтавлă ĕçре çитĕнÿсем тума сĕнетĕп.

ССР Союзĕн Оборонă халăх комиссарĕ Совет Союз маршалĕ
К. ВОРОШИЛОВ.
(ТАСС).

Мускав. ПСК(б)П Тепкомĕ—СТАЛИН йулташа

Хаклă Сталин йулташ, Чăваш республикĕнчи наркомвнуделцăсен коллективĕ ВЧК—ОГПУ—НКВД 20 çул тултарнă кун сире чĕререн йуратнине тата парăнса ĕçленине палăртса, йуратнă çулпуçа, социалисăмăн аслă çĕнтерĕвĕсен организаторне чекисла хĕрÿлĕ салам йарать.

Есĕр, аслă Сталин, ăслăн йертсе пынипе, пирĕн чаплă большевиксен партийĕ йертсе пынипе социалисăмăн хайар тăшманĕсене—тулашĕнчи тата шалти тăшманĕсене, троцкисла-зиновйевла-бухаринла урса кайнă шпионла бандăсене, диверсантсемпе сыхвĕлерекенсене, капиталисăм йулашкисене—кулаксене хирĕç пĕр хĕрхенмесĕр кĕрешсе пынипе ССР Союзĕн халăхĕ социалисăмăн пĕтĕм тĕнчипе историлĕ çĕнтерÿ турĕ. Санра, хаклă Иосиф Виссарионович, пирĕн халăх çĕнтерÿ тума тăрăшни, хăватлă вăй тата пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен нихăçан пĕтми, революцилĕ хавхалану пĕрлешсе тăрать.

Пирĕн çĕнтерÿсене, пирĕн телейлĕхе Аслă Сталинла Конституци çине çырса хунă. Епĕр, чекистсем, хаклă Сталин йулташ, епĕр капиталисăмла йĕри-тавралăхра пурăнни çинчен тата фашисла разведкăсем пирĕн пата хăйсен шпионĕсене, диверсантсемпе сынвĕлерекенсене йарса тăни тата малашне те йарса тăрасси çинчен есĕр каланине лайăх астуса тăратпăр. Епĕр сире, Сталин йулташ, тара типĕ тытса тăма сăмах паратпăр. Сталинла Конституцине çырса хунă çĕнтерÿсемпе усă курса епĕр малала та халăхăн пур тĕрлĕ тăшманĕсене хирĕç ним хĕрхенмесĕр кĕрешсе пыма, совет çĕршывне троцкисла-бухаринла-рыковла çĕлен-калтасенчен, бандитсемпе сынвĕлерекенсенчен тасатса пырăпăр. Хамăрăн хăватлă Ленин—Сталин партийĕ тавра, хамăрăн тăван та пултарулă Сталин йулташ, сирĕн тавра татах та таччăн пĕрлешетпĕр.

Сталинла халăх комиссарĕ Йежов йулташ йертсе пынипе чекистăн хисеплĕ важтине сыхăлăхлă тăма тупа тăватпăр.

Сывă пултăр пирĕн никам çĕнтереймен Аслă Ленин—Сталин партийĕ!

Сывă пултăр коммунисăм маршалĕ аслă Сталин!

Мускав. ССРС Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕ. Йежов йулташа

Хаклă Николай Иванович! Сире, халăхсен аслă çулпуçĕн Сталин йулташăн шанчăклă соратникне, пирĕн хурçă наркома, епĕр, Чăваш республикĕнчи чекистсем, ВЧК—ОГПУ—НКВД организациленни 20 çул тултарнă кун хĕрÿлĕ большевикла салам йаратпăр.

Пирĕн большевиксен хăватлă партийĕ тата халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ йертсе пынипе тунă социалисăмăн çĕнтерĕвĕсем аслă та çирĕп.

Çак çĕнтерÿсене фашисла разведкăсен, урса кайнă шпионсен, диверсантсен, бандитсен, сынвĕлерсен троцкисла-зиновйевла, бухаринла-рыковла бандисене хирĕç хайаррăн кĕрешсе пырса тунă.

Халĕ капиталисăмла йĕри-тавралăх пур чухне, капиталисла патшалăхсем пирĕн çĕршыва шпионсем, диверсантсем, бандитсемпе сынвĕлеренсем йарса тăрассине епĕр пĕлетпĕр.

Анчах пирĕн совет разведки, есĕр çирĕп йертсе пынипе, пĕтĕм халăх пулăшса тăнипе, халăх тăшманĕсен сăтăрла ĕçĕсене вăхăтра тытса чарассине те епĕр лайăх пĕлсе тăратпăр.

Пирĕн аслă партипе унăн генилĕ çулпуçĕ Сталин йулташ йертсе пынипе, есĕр, Николай Иванович пуç пулса тăнипе, епĕр, Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн работникĕсем, ĕççыннисене коммунисăмăн çĕнтерÿлĕ аслă çулĕпе малала кайма чăрмантарас текен мĕн пур тăшмансене тымарĕпех кăкласа пăрахатпăр.

Пуху президиумĕ.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕнче

Правителствăн турттарас тĕлĕшпе панă ответлă заданине кăтартулăн тата тĕрĕс пурнăçа кĕртнĕшĕн, ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ, çав заданийе тултарнă çĕрте ĕçленĕ Шалти ĕçсен халăх комиссариачĕн Инçет-Хĕвелтухăç крайĕнчи Управлени начальникне Г. С. Люшков йулташа, Шалти ĕçсен халăх комиссариачĕн Инçет-Хĕвелтухăç крайĕнчи Управлени сотрудникĕсен пĕтĕм коллективне тата Инçет-Хĕвелтухăç чукунçулĕн работникĕсене тав тунă.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ ССР Союзĕн Шалти ĕçсен халăх комиссарĕпе Чукунçул халăх комиссарне Шалти ĕçсен халăх комиссариачĕн Инçет-Хĕвелтухăç крайĕнчи Управленин уйрăмăн палăрнă работникĕсене, çавăн пекех тата Инçет-Хĕвелтухăç чукунçулĕ çинче ĕçлекен уйрăммăн палăрнă работникĕсене наградă пама тăратма хушнă.

(ТАСС).

Ваттисен савăнăçĕ

Пирĕн нумай мĕлйунлă совет граждăнĕсем коммунисăм патне пысăк хăвăртлăхпа хăватлăн çĕнтерсе пыракан хăйсен тăван социалисăм çĕршывне вĕçĕ-хĕррисĕр, пĕтĕм чĕререн йуратаççĕ. Мĕнле йуратмăн-ха социалисăм çĕршывне? Вăл пирĕн, пирĕн тăван çĕршыв! Вăл капиталиссем пуçпулса тăнă чухнехи пек тĕттĕм мар, чухăн мар, правасăр мар. Вăл аслă, вăл хăватлă, вăл тĕреклĕ, вăл пуйан. Çак çирĕм çул хушшинче пирĕн çĕршыв телейлĕ, мухтавлă тата никам çĕнтерейми социалисăмла державă пулса тăчĕ. Халĕ ССР Сойузĕнчи 170 мĕлйунлă халăх — пĕр телейлĕ çемçе. Çĕршыври пĕтĕм пурлăх, пĕтĕм пуйанлăх халăхăн.

Патша Роççийĕ халăхсен тĕрми, нацилĕ пусмăрлăхпа правасăрлăх çĕршывĕ пулнă. Халĕ ССР Сойузĕнчи халăхсем туслă, пĕртан правалă, телейлĕ те савăнăçлă, пуйан та куљтурлă пурнăçпа пурăнаççĕ. Пирĕн çĕршывра эксплоататорсем çук, фабрик-завод хуçисем, помещиксем, купцасем, кулаксем, усламçăсем, ĕççыннисен вăйĕпе шыймакланса пурăнакансем тата ĕççыннисен йунне ĕçекен тискер çĕлен-калтасем çук. Чухăнлăх, тĕттĕмлĕх, безработицă тата правасăрлăх, вĕсем пурте ĕмĕрлĕхех пĕтнĕ, тĕп пулнă.

Халăх ирĕкĕпе, халăхăн пĕтĕм кăмăлĕсене хисепе илсе тунă Сталинла Конституци,—ССР Сойузĕн Тĕп Саккунĕ,—пĕтĕм совет граждăнĕсене пурне те тивĕç ĕçлев, кану, вĕренÿ, ватăлсан, çавăн пекех тата чирлесен йе ĕçлейми пулсан пурăнмалăх пулăшу илме правасем парат, государствă управленийĕн ĕçне активлăн хутшăнтарат.

„ССР Сойузĕн граждăнĕсен права пĕртанлăхĕ, вĕсен национаљнăçĕпе расине пăхмасăр, пĕтĕм хуçалăх, государствă, куљтурă тата обществăпа политикă пурнăçĕнче никам пăсайми саккун пулса тăрат“. (Сталинла Конституцин 123-мĕш статйи).

Çакă аслă правалă пурнăçа Ленин—Сталин партийĕ туса пачĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ, ССР Сойузĕнчи пĕтĕм граждăнсем хăйсен тăван çĕршывне, Ленин—Сталин партине, çĕнтерсе илнĕ социалисăм Конституцине, ăна тăвакан аслă Сталин йулташа пĕтĕм чĕререн йуратаççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ, ватă карчăксемпе мучисем помещиксемпе капиталиссем пуç пулса тăнă чухнехи пурнăçа, 20 çул кайарахри тĕттĕм, чухăн, правасăр, пусмăрлăх тата выçă пурнăçа темиçе хутчен ылханаççĕ. Акă мĕн калаççĕ вĕсем суйлав умĕн пулнă пуххусенче.

— Ĕлĕкхи пурнăçа питĕ лайăх астăватăп. Манăн атте крепостной хресчен пулнă. Унăн çемйинче тата тепĕр икĕ çемйене помещик пĕр йытăпа улăштарнă. Вăл помещик, хресченсене виççĕршер тенкĕ сутатчĕ. Хамăн йуратнă йăмăка та 300 тенкĕ тÿлесе тискер пусмăртан, помещик аллинчен ирĕке кăлартăм. Лайăх астăватăп, пĕррехине помещик „хăйĕн“ хресченне нимĕн сăлтавсăр вĕлерттерчĕ. Унăн урисене сăнчăрланă пулнă. Апла çĕре пытарма май килмен. Сăнчăр çăрине уçакан жандарм килте пулман. Çав тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ çынăн урине пуртăпа татса, сăнчăрне помещик хăй илчĕ, вара тин унăн ÿтне çĕре пытарттарчĕ. Кам манĕ çавăн чухнехи тискер пусмăрлăх пурнăçне? Çук, манмастпăр! Епĕ халĕ 80 çулта ĕнтĕ. Хаљхи телейлĕ тата пуйан та ирĕк пурнăç чĕрене çамрăклатрĕ. Ÿт-пĕвĕ ватă пулсан та, çĕршыв пекех çамрăк епĕр. Телей кунĕшĕн спасибă Сталин аттене,—тет Ф. Сидоров мучи.

— Манăн асаттене Кожевников помещик Хусанта пурăнакан нимĕçе тарса пачĕ. Кайас умĕн помещикран махоркă тата супăнь илмелĕх укса ыйтрĕ. Пĕр пус та памарĕ, хăйса укса ыйтнăшăн 70 хут чĕн пушăпа çаптарчĕ. Икĕ уйăх сывмарланса выртрĕ асатте,—тет Семенова. — Астăватăп, мана тантăш хĕрачасене помещик шартлама сивĕре çара уран тăм çăртаратчĕ,—тет 75 çулхи Котов йулташ, Семенова кинемей сăмахĕ çумне хушса.

— Çĕр! Çынсен амăшĕ вĕт вăл. Мĕн чухлĕ макăрнă, мĕн чухлĕ куççуљ йухтарнă унăшăн! Есĕ чухăн — çĕре тивĕçлĕ пулман. Халĕ вăл пĕтĕмпех пирĕн. Çĕр çĕнелчĕ, вăл пуйанланчĕ, пирĕншĕн сĕткенленчĕ. Çĕнелнĕ çĕр çинче ĕçлеме те, ÿтма та, сывлама та, канăç курма та çăмăл. Халĕ епĕр пуйан, пирĕн пурнăç телейлĕ, савăнăçлă. Хаљхи пурнăç çамрăклатрĕ пире, пурăнас килет! — тет Йермошкинă колхозĕнчи 75 çулхи Феоктистова колхозницă.

— Хĕрарăмсем йатсĕр пулнă, вĕсене çĕр паман. Пĕтĕм хăйарлă çĕре чухăнсене панă. Икĕ пăт тырă акса 5 пăт илеттĕм. Пĕтĕм тырпулĕпе çĕр çимĕçĕсене пухсан та 20 пăтран ытла илмен. Вăл шутран 8 пăтне кулана панă, тепĕр çавăн чухлĕ акса панăшăн, кивçен илнĕшĕн, кулаксене, пупсене тата ытти харампырсене панă. Тырă пухса кĕрсен пĕр-ик уйăхран çиме те, акма та тырă йулман. Халĕ епĕ колхозра. Вăрлăх хатĕр, çĕр акăнмасăр нихăçан та йулмаст. Государствă умĕнчи пĕтĕм обйазательствăсене парса татнă. 60 пăт тĕштырă хамăн алла илетĕп. Ку пире арăмпа иксĕмĕре икĕ çул ытла пурăнма çитет,—тет Хăмăш колхозĕнчи 50 çулхи Иванов Андрийан колхозник.

— Патша саманинчи тискер пурнăçа асаилсен йĕрес килет. Тăватă çул хуçи Рыжов арман хуçи патĕнче тарçăра пурăнтăм, пĕр пус укса памарĕ тискер çĕлен-калта. Кашни кун йухăнса пынă епĕр, чухăнсем. Унчухнехи пурнăç—вăл халăхсен тĕрми. Халĕ телейпе, хисеплĕхпе тата мухтавлăхпа тулнă чĕре савăнăçне кăтартма сăмах çитмест. Епĕ колхозра. Пуйан епĕ. Колхозра числă ĕçленипе 250 пăт тĕштырă, 108 пăт çĕрулми, 224 тенкĕ укса тата ыттисене те илетĕп. Ĕлĕк выљăх-чĕрлĕх усраса курман. Халĕ икĕ ăратлă ĕне, 5 сурăх, 4 сысна, 10 чăх пур манăн. Çĕнĕ пÿрт лартрăм,—тет Богданов мучи.

Акă „Хĕрлĕ партизан“ колхоз членĕ Анисимова Мавра. Вăл 1912 çулта мăшăрĕ вилсен, нумай çул хушши 5 çулхи ывăлĕпе—Петĕрпе йалсем тăрăх çÿренĕ. Халĕ вăл колхозра. Унăн ывăлĕ—Петĕр аслă шкул пĕтерсе, Мускавра врач пулса ĕçлет, иккĕмĕш ывăлĕ—Макар Горькири инженерла-техникла институтра вĕренет, виççĕмĕшĕ — Леонид Хусанти коммуналлă строителнăй институтра вĕренет.

— Мĕншĕн савăнас мар, мĕншĕн хĕпĕртес мар халăхи телейлĕ те савăнăçлă ирĕк пурнăçра! Спасибă Сталин аттене,—тет вăл. Анисимова [illegible] пирĕн çĕршывра мĕлйунĕпех.

Çак телейлĕ те савăнăçлă, пуйан та куљтуралă, хисеплĕ те ирĕк пурнăçа—халăхсен шухăшĕсемпе ĕмĕчĕсене хисепе илсе, Ленин çулĕпе çĕнтерÿлĕн йертсе пыракан коммуниссен партийĕ, Совет влаçĕ, пирĕн тăван атте, халăхсен çулпуçĕ аслă Сталин туса пачĕ.

Сталин! Вăл кĕрешÿ йалавĕ, вăл етемлĕхĕн телейĕ, вăл пĕтĕм çĕршывăн савăнăç хĕвелĕ, вăл совет граждăнĕсен хăвачĕ, мухтавĕ. Вăл коммунисăм çĕнтерĕвĕсемшĕн мобилизацилекен социалисăм Конституцине тăвакан.

Çавăнпа та ĕнтĕ, Сталин йулташа ССР Сойузĕнчи халăхпа пĕрле, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем пĕтĕм чĕререн йуратаççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ, декабĕрĕн 12-мĕшĕнче—Аслă Совет суйлав кунĕ пĕтĕм Совет халăхĕ пысăк хастарлăхпа коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăласа, бољшевиксен партийĕшĕн, Аслă Сталиншăн сасăларĕç.

„Кĕрешÿпе йăварлăхсем тÿснĕ çула утса тухнă хыççăн, пирĕн çĕнтерÿсем кÿнĕ çимĕçсем çинчен калакан хамăрăн Конституци пурри кăмăллă та савăнăçлă. Пирĕн çынсем мĕншĕн кĕрешнипе тата вĕсем пĕтĕм тĕнче историнче мĕнле паллă историлĕ çĕнтерÿсем тунине пĕлме кăмăллă та савăнăçлă. Пирĕн çынсем нумай йун йухтарни харама кайманнине, вăл хăйĕн резуљтачĕсене панине пĕлме кăмăллă та савăнăçлă“ (Сталин).

Суйлавçăсем сывлăх сунаççĕ

ВĂРНАР. (Хамăр корр.). Районри ĕççыннисен кашниннех пĕр шухăш, пĕр тĕллев. Вĕсем хăйсем сасăланă кандидатсем ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйланни çинчен пĕлесшĕн. Çак шухăш пурне те хумхантарат.

Декабĕрĕн 15-мĕшĕнче „Ĕç йалавĕ“ колхоз правлени канцеларине колхозниксем пухăнчĕç. Кăнтăрла çитнĕ çĕре йалти писмоносец Илйа Железнов çĕнĕ хаçат-журналсене пĕр сумкă тулли йатса пырса кĕчĕ.

— „Чăваш Коммунĕ“, пур-и?

— Хаçатсем çинче ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйланнисем çинчен çырни пур-и?—ыйтаççĕ вĕсем.

Пурте хаçатсене часах аласене илчĕç, тимлĕн вулама тытăнчĕç.

— Акă, Краснов йулташăн сăнĕ пур. Депутата суйланнă. Ку питĕ пысăк телей. Вăл чăваш халăх ывăлĕ, тырпул маçтăрĕ, — ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн депутачĕ. Ку пирĕншĕн пысăк савăнăç,—тет ватă колхозник Александр Тихонович.

Хăйсем сасăланă кандидатсем В. П. Чкалов, Н. И. Пумпур, А. М. Краснов йулташсем ССР Сойузĕн Аслă Совет депутатне суйланнине пĕлсен, колхозниксем питĕ савăнчĕç.

— Аслă Совета суйланă кун маншăн нихăçан пулман пысăк савăнăçлă уйав кунĕ пулса тăчĕ. Йепле-ха хавасланса савăнмăн? Епĕр историре чи малтан Аслă Совета хамăрăн шанчăклă та тава тивĕçлĕ çынсене вăрттăн (хупăн) сасăласа депутата суйларăмăр. Кунашкал суйлав пулассине ку таринччен никам та шутлама пултарайман. Ленин—Сталин партийĕ кăна, халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ [illegible] çынните çеç, епĕр хамăрăн депутатсене тÿррĕмĕн тата вăрттăн сасăласа Аслă Совета суйлама пултартăмăр.

Пайан пирĕншĕн тепĕр пысăк савăнăç. Епĕр сасăланă кандидатсем Чкалов, Пумпур, Краснов йулташсем депутата суйланнă,—тет колхозник В. Захаров.

Суйлавçăсем вĕсене пурне те сывлăх сунаççĕ.

С. Улангай.

Коммуниссемпе партире тăманнисен Сталинла блокĕ çĕнтерÿ тунишĕн савăнаççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. („Чăваш Коммунĕ“ корр.). Çĕмĕрле хулинчи ĕççыннисем коммуниссемпе партире тăманнисен блок çĕнтерÿне пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. Предприйатисенче митингсем пулса иртеççĕ. Декабĕрĕн 17-мĕшĕнче пулса иртнĕ хулари ĕççыннисен митингĕнче ССР Сойузĕн Аслă Совет депутачĕ Иван Васильевич Новиков йул. тухса сăмах каларĕ.

— Епĕ йепле савăннине сăмахпа каласа пама пултараймастăп. Мана Çĕмĕрле округĕнчи ĕççыннисем Аслă Совет депутатне суйларĕç. Епĕ, йулташсем, çак шанăçа пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăйа хурса ĕçлеме пулатăп,—тет Новиков йулташ.—Ленин — Сталин партийĕ, унăн çулпуçĕ аслă Сталин йулташ пире йаланах бољшевикла сисĕмлĕхе вăйлатма хушаççĕ, вĕрентеççĕ. Епĕ шантаратăп, епĕ те, коммуниссен партипе Сталин йул. вĕрентнисене çирĕппĕн пурнăçласа пыма, коммунисăм обществине туса çитерессишĕн мĕн пур вăйа, кирлĕ пулсан хамăн пурнăçа шеллемесĕр ĕçлеме пулатăп.

Новиков йулташ хыççăн, сăмах Носков йулташ калат. Унтан комсомол райкомĕнчен, предприйатисенчен саламлă сăмахсем тухса калаççĕ.

— Аслă Совета суйлани, пирĕншĕн çав тери савăнăç пулса тăрат. Епĕр, комбинатри рабочисем, Аслă Совета суйланă куна ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илтĕмĕр. Пайан акă пирĕн столљарнăй цех çулталăкри плана 100,2 проц. тултарчĕ,—терĕ комбинатра ĕçлекен стахановец, партире тăман Леонтйев йулташ.

5 пин çынлă митинг пĕр сасăпах сыкăн пек резољуци йышăнчĕ:

„Епĕр, ССРС Аслă Совет суйлав резуљтачĕсене, государствăн аслă оргăнне пĕтĕм халăхсен депутатне, çулпуçне тата пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен учителне Сталин йулташа суйланине, çавăн пекех унăн сывăх соратникĕсемпе питомцисене, çĕршыври чи лайăх çыннисене, партипе партире тăман бољшевиксене Аслă Совета суйланине пысăк хаваслăхпа тата ăшă кăмăлпа кĕтсе илтĕмĕр.

Епĕр, Çĕмĕрле хулинчи ĕççыннисем, Аслă Совета хамăр округра суйланă депутатсене: В. П. Чкалова, А. М. Краснова, И. В. Новикова тулли кăмăлпа саламлатпăр.

Коммуниссемпе партире тăманнисен Сталинла блокĕн çĕнтерĕвĕ пĕтĕм халăха савăнтарат. Епĕр малашне хамăр социалисăмла тăван çĕршыва çирĕплетме татах та çирĕпрех ĕçлеме, стахановла йухăма анлăн сарса йама, троцкисла-бухаринла, буржуалă националиссен, клас тăшманĕсен сăтăрла ĕçĕсене тĕппех пĕтерсе пыма пулатпăр. Çавăнпа пĕрлех хамăрăн револ ю цилĕ сисĕмлĕхе татах та вăйлатса, камăрăн хисеплĕ те маттур Шалти ĕçсен халăх комиссариачĕн оргăнне троцкисла-бухаринла, буржуалă националисла бандăсене тĕппипех кăкласа тăкма пулăшса пыма пулатпăр.

Сывă пултăр ССРС Аслă Совечĕ!

Сывă пултăр ПСК(б) Партийĕ!

Сывă пултăр çĕнĕ Конституци тăваканĕ, ССРС Аслă Совечĕн пĕрремĕш депутачĕ пирĕн тус, атте, аслă Сталин!“

Депутатсемпе çирĕп çыхăну тытатпăр

Декабĕрĕн 17-мĕшĕнче, ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕ пулса иртнине хапăлласа, Канашри мебелсем тăвакан фабрикра рабочисемпе служăщисен хаваслă митингĕ пулса иртрĕ. Митингра пурĕ 113 çын пулчĕ.

Митингра Пољачихин йулташ ССРС Аслă Совечĕн суйлавĕ пысăк çĕнтерÿпе иртни çинчен, суйлавра коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ çĕнтерни çинчен каласа пачĕ. Рабочисем Канаш суйлав округĕ тăрăх Горкин, Чкалов тата Цыганова йулташсем Аслă Совета депутата суйланнине пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. Вĕсем Аслă Совета суйланнă пĕрремĕш депутата халăхсен йуратнă çулпуçне Сталин йулташа тата унăн чи сывăх соратникĕсене саламларĕç.

— Суйлав çĕнтерÿлĕн иртни, коммунисла парти хыççăн пĕтĕм совет халăхĕ хурçă стена пек пынине, кунашкал вăй урăх тĕнчере çуккине, партине халăхран, халăха партирен уйăрма пултаракан нимĕнле вăй та çуккине пĕтĕм тĕнче умĕнче палăртса пачĕ,—тет цех маçтăрĕ Филиппов йулташ.

— Пĕтĕм халăхпа сасăлани нумай нацилĕ ĕçхалăхĕ партипе Совет влаçне, хамăр тăван çĕршыва йуратса тănине кăтартса пачĕ. Суйлав ĕçхалăхĕн сарлака массине коммунисла парти, йуратнă çулпуç Сталин йулташ таврă тата татчăнрах пĕтĕçтерчĕ. Тăван çĕршывăн пĕтĕм ĕçхалăхĕ хăйсен сассисене коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн пачĕ. Çакă вăл Совет влаçĕ никам çĕнтермеле мар çирĕп пулса тăнине кăтартса пачĕ,—тет Шулайковский йулташ. Йулашкинчен митинг пĕр сасăпа çапла резољуци йышăнчĕ:

„ССРС Аслă Советне суйламали Тĕп Комиссĭ, округри комиссисем суйлав резуљтачĕсем çинчен пĕлтернине епĕр пĕтĕм чĕререн савăнса йышăнатпăр.

ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Сойуз Советне тата Национаљнăçсен Советне пĕтĕм халăх ирĕкĕпе суйланнă депутатсене, чи малтанах пĕрремĕш депутата Сталин йулташпа унăн сывăх соратникĕсене пĕтĕм чĕререн йуратса саламлатпăр. Епĕр хамăр Канаш суйлав округĕнчен Аслă Совета Горкин, Чкалов тата Цыганова йулташсем депутата суйланнăшăн питĕ савăнатпăр.

Епĕр, рабочисемпе служăщисем, халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташăн сăмахне нихăçан та манмастпăр, хамăр депутатсемпе кулленех çирĕп çыхăну тытса пыратпăр.

Епĕр Сталин йулташ каланине пурнăçа кĕртме, депутатсен ĕçне йаланах контрољ туса, вĕсене ĕçре пулăшса пыма пулатпăр.

„Сывă пулчăр Аслă Советăн депутачĕсем!

Сывă пултăр Ленин—Сталин партийĕ!

Сывă пултăр халăхсен йуратнă çулпуçĕ Сталин йулташ—социалисăмла государствăн Аслă Совечĕн пĕрремĕш депутачĕ!“

И. Малов.

Ташкентри хĕрарăмсен Октăбĕр револ ю ци йачĕпе тăракан клубĕнче питĕ лайăх хĕрлĕ чайхан тунă. ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: клубри активисткă Мархамат Усманова чайхан пÿлĕмне илемлетет.

(Сойузфото).

Виçĕ агрессор тунă блок

Фашисла Италипе Германи тата милитарисла Йапони 1937 çулти нойабĕрĕн 6-мĕшĕнче Италин столицинче—Римра „Коминтернпа кĕрешессĭ“ çинчен виççĕн пĕрле килĕшÿ тунă. Çулталăк кайарах 1936 çулти нойабĕрĕн 25-мĕшĕнче, Йапонипе Германи хушшинче çавăн пек килĕшÿ пулнă.

Кăçал Римра алă пусса çирĕплетнĕ договор — фашисла Итали ытти икĕ агрессор тунă килĕшÿ çумне ахаљрен çеç хутшăннипе пĕлтермест. Икĕйенлĕ килĕшÿ çумне хутшăнса, Итали виççĕн малашне тытса пырас политикăшăн çеç мар, унччен Германипе Йапони тытса пынă политикăшăн та хăй çине ответ илет.

„Коминтернпа кĕрешесси“ çинчен килĕшÿ тунă виçĕ агрессорăн программисем пурин те пĕрех. Вăл—тĕнчене çĕнĕрен пайлас тĕлĕшпе вăрçă вăрçасси. Çав вăрçă программине пурнăçламали меслечĕсем те пĕрех. Вăл — вăрçăпа тапăнса кĕресси, йутçĕршывсене тытса илесси, мирлĕ хуласене тата йалсене сывлăшран та, çĕр çинче те бомбăсемпе çунтарасси, тинĕсре суту-илÿ карапĕсене путарасси т. ыт. те. Вĕсем тĕнчене çĕнĕ вăрçа кĕртсе йарасшăн, етемлĕхе йун айне тавасшăн.

Асăннă агрессорсем тĕнчен икĕ вĕçĕнче вăрçă вутне чĕртсе йачĕç. Хĕвелтухăçĕнче Йапони ултă çул кайарах Манчжурийĕ тытса илчĕ. Унтанпа вĕçĕмсĕр чăкалташса, йулашкинчен, мирлĕ Китайа хирĕç чăн-чăн вăрçă пуçласа йачĕ. Халĕ Шанхай тăврашĕнче те, Нанкин тăврашĕнче те, Çурçĕр Китайра та, Кăнтăр Китайра та Китай халăхĕн йунĕ йуханшыв пек йухат. Хĕвеланăçĕнче фашисла Итали икĕ çул кайарах Абиссини çĕршывне тытса илчĕ. Унтанпа нумай та вăхăт иртмерĕ, вăл фашисла Германипе пĕрле Испанире саккунлă правитĕлствăна хирĕç пăлхав организацилесе, хăйĕн çарĕпе Испани çĕршывĕ çине тĕшкĕрсе кĕчĕ. Италипе Германи самољочĕсем, танкĕсем, пулемйочĕсем, тупписем çулталăк çурă ĕнтĕ паттăр Испани халăхĕн йунне тăкаççĕ. Халĕ вĕсем,—фашисла Италипе Германи тата милитарисла Йапони,—вăрçă вутне тата ыглларах чĕртсе йама договор тунă.

Виçĕ агрессор чи малтан Францийе, Английе тата Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсене хирĕç тăма килĕшÿ тунă пулсан, агрессорсем хăйсен килĕшÿ çивĕчĕшне çавăн пекех тата Совет Сойузне хирĕç те тытаççĕ. Вĕсем социалисăм çĕршывне йепле хытă курайманни пурне те паллă. Германи фашисĕсем ССР Сойузĕнчен Украйнăна татса илме ĕмĕтленеççĕ. Йапони милитарисĕсем советсен Инçет-Хĕвелтухăçне тытса илме ĕмĕтленеççĕ. Вĕсем хăйсен ĕмĕчĕсене пытарса тăмаççĕ, сăмах вĕççĕн те, пичет урлă пĕр хут кăна мар калаççĕ.

Совет Сойузĕ—мир тĕрекĕ, никам ишĕлтерейми мир тĕрекĕ. Агрессорсен блокĕ вăрçă инструменчĕ пулса тăрат. Фашисăм—вăл вăрçă. Социалисăм — вăл мир. Совет Сойузĕ вăрçă пуçланассине пÿлсе тăракан хăватларан та хăватлă вăй пулса тăрат.

Агрессорсем чăрсăрланнă çемĕн чăрсăрланса пыраççĕ пулсан, вăл ĕнтĕ мир фрончĕ çителĕклĕ çирĕп марринчен килет, хăшпĕр капиталисăмлă правитĕлствăсем, чи малтан Англи правитĕлстви, агрессорсене хирĕç çирĕп политикă тытса пыманнинчен килет.

Çав правитĕлствăсен политики çинчен Литвинов йулташ тĕрĕс те [illegible]аван каласа пачĕ. „Вĕсем агрессорсем патне тек-текех çакăн пекрех ыйтса йараççĕ:—тет Литвинов йулташ,— „Есĕр халăхсем хушшинчи договорсене йышăнмастăр, терĕр, чăнах та вĕсене пăсатăр, есĕр ытти государствăсен хăрушăсăрлăхне тата никам тĕкĕнмелемарлĕхне хисеплесшĕн мар, чăнах та çав хăрушăсăрлăхпа никам тĕкĕнмелемарлăхран хăшне-пĕрне тÿртса йлтĕр. Есĕр пирĕнпе пĕрле ĕçлессине сивлетĕр, чăнах та тĕнче организацийĕсене, канашлăвĕсене тата конференцийĕсене хутшăнма отказ тăватăр. Епĕр сире тĕрĕс ăнланса илтĕмĕр-ши тата есĕр хăвăр мĕн каланинех шутлатăр-ши, пирĕн çавна пĕлес килет. Ырă пулсамăр, çавна çирĕплетсе тĕрĕсрех каласа парăр“.

Çапла ĕнтĕ, хăшпĕр капиталисăмлă çĕршывсен правитĕлствисем агрессорсене апла та капла та ÿкĕтлеççĕ, тархаслаççĕ. Чипер пĕлсе тăнă çĕртенех, „есĕр чăнахах та агрессорсем-и, тÿрă пулăр, каласа парăр пире çавăн çинчен“, тесе йăлăнса ыйтаççĕ. Лешсем ÿкĕтсе кĕме шутламççĕ те. Мĕн чухлĕ ытларах ÿкĕтлеççĕ, агрессорсем ÿкĕтлекенсен урине çавăн чухлĕ хытăрах таптаççĕ.

Агрессорсем çапла калаççĕ: „епĕр коммунисăма хирĕç кĕрешме пĕрлешетпĕр“, теççĕ. Анчах ку вăл вĕсен хăйсен чăн-чăн шухăшĕсене, хăйсен чăн-чăн планĕсене витсе пытармали пĕркенчĕк çеç пулса тăрат, урăх нимĕн те мар. Иртнĕ çул Йапонипе Германи договор туса çирĕплетес умĕн тăватă кун малтан, 1936 çулти нойабĕрĕн 21-мĕшĕнче, Геринг генералă сывăх тăракан „Национаљ Цейтунг“ хаçат, Испани пăлхавçисене çине тăрса пулăшас пулат, тесе çырнă. Ахаљрен мар ĕнтĕ Геринг хăй те, Йапонипе Германи килĕшÿ тунă хыççăн çийĕнчех, Испанири событисем пире çавăн пек килĕшÿ тума хушаççĕ, тесе каланă.

Виççĕн тунă договорта тата уй çумне хушса çырнă протоколра, килĕшÿ тăвакансем „Коммунисăм хăрушлăхне“ хирĕç хăш çĕршывра вăрçмалине хăйсем палăртаççĕ, тесе уççăнах каланă. Договорăн чăн тупсăмĕ пирки нимĕн иккеленмели те çук. Тĕнчери пичет пĕлтĕрех çав килĕшÿ уйрăм государствăсен умне мĕнле хăрушлăх кăларса тăратма пултарни çинчен çырнă. Сăмахран, Англи конçерваторĕсен „Таймс“ хаçачĕ 1936 çулти нойабĕрте: Германипе Итали тунă сойуз пысăк хăрушлăх кăларса тăратат, вăл пуринчен ытла пирĕн интерессене пырса тивет. Германипе Итали Индонези çине ал хурасшăн тенĕ сас-хурасем пур. Çав сас-хурасем ахаљренех сиксе тухман пулĕ, тесе çырнă.

„Апла-и вăл йе апла мар,—тесе çырат асăннă хаçат,—анчах çав килĕшÿ Йапони Китайăн кăнтăр йенне тапăнса кĕрессине чылайах хăвăртлатат. Йевропăра шикленме сăлтав пур, Чехословакине „бољшевизацилессине“ хирĕç Германи пĕр чарăнмасăр тата каçарма çук латсăр кампани туса пыни питех те ырă мар йапала патне илсе пыма пултарат. Политикăлă атмосферă татах та йапăхланнинчен мĕн сиксе тухма пултарассине хаљхи вăхăтра курса илме çăмăл мар“.

Çав сăмахсене фашиссен хутне кĕрекенсем, агрессорсене уступкă тăвасшĕн сунакансем калаççĕ. Теменлех йÿçĕ пулсан та, факт. Англи ăна йышăнмасăр тăма пултараймасть. Йышăнас марччĕ те, анчах агрессорсем Англи интерĕсĕсене хĕснĕ çемĕн хĕсеççĕ.

Виçĕ агрессор килĕшÿ туса çирĕплетнĕ хыççăн тепĕр кунхех Францири „Еко де Пари“ хаçат çапла çырнă:

„Мĕн калама май пурринчен çакна каламала,—Итали-Йапони-Германи системи Совет Сойузне, тен, Британи импĕрине пырса тивнинчен сахалтарах тивет. Каласса таталнă виçĕ çĕршыв Совет правитĕлствине хирĕç тÿррĕн кампанипе тухма пултараймаççĕ. Йăлтах урăхла, вĕсенчен кашни Англи çине тата унăн владенийĕсем çине тапăнма пултарат: Германи Лондон çине сывлăш флотне йама пултарат, Итали Йегипет çине тапăнса кĕрессипе хăратат, Йапони Гонгонга тата Сингапура тытса илессипе хăратат. Вăл çавăн пекех Францийе те тивет“.

Америкăри йертсе пыракан хаçатсем çавăн йевĕрлех çыраççĕ. Сăмахран, „Вашингтон пост“ хаçат акă мĕн çырат:

„Фашисла державăсем иккĕш те хăшпĕр вăхăт хушши Латин Америкин çĕршывĕсенче хăйсен пропагандине хастаррăн сарса пыни секрет пулса тăмаст. Çапла вара, фашисла виçĕ державă тунă килĕшÿ Америкăри Пĕрлешÿлĕ штатсене питĕ çывăх пырса тивет. Пирĕн правитĕлствă лăпкă мар. Фашисла интернационал Латин-Америкинче Пĕрлешÿлĕ Штатсемшĕн чылай йăварлăхсем кÿме пултарат“.

Çакăн хыççăн тепĕр темиçе кунранах Германипе Итали агĕнчĕсем пулăшнипе Бразилире фашисла переворот пулса тăнă. Ку, паллах, Вашингтон чĕрине тата та ытларах хускатса йачĕ.

Фашисла Германин, Италин тата милитарисла Йапонин чăн планĕсем сăнă пекех курăнса тăраççĕ. Вăрçă пуçласа йама нимĕн те ан чăрмантăртăр тесе вĕсем, виççĕш те, Лига Нацинчен тухнă Итали çак кунсенче, декабĕрĕн 11-мĕшĕнче тухрĕ. Вĕсене ирсĕр те йунлă ĕçре троцкисла бандăсем пулăшса тăраççĕ. Испанире тата Китайра фашисăм агĕнчĕсем—троцкиссем халăх фронтне салатса йарасшăн тапаçланаççĕ, провокаци хыççăн провокаци тăваççĕ, хăйсен ирсĕр ĕçне туса пыраççĕ.

Виçĕ агрессор çĕнĕ вăрçă пуçласа йарас тĕлĕшпе пĕр план тăрăх ĕçлеççĕ. Ку вăл вĕсен хушшинче пысăк хирĕçÿсем çук тенине пĕртте пĕлтермест. Хирĕçÿсем пур. Хирĕçÿсем Италипе Германи хушшинче те, Италипе Йапони хушшинче те, Германипе Йапони хушшинче те пур. Анчах хаљхи вăхăтра çав хирĕçÿсем Йапонине, Германипе тата Италипе пĕрле блок тума чăрмантарса тăмарĕç.

Агрессорсем хăратса тăракан капиталисăмлă çĕршывсем фашисла агрессине хирĕç хастаррăн тăрас политикă тытса пынă пулсан, виççĕн тунă килĕшÿ практикă тĕлĕшĕнчен ытлах пысăк вырăн йышăнса тăман пулнă пулĕччĕ. Анчах та буржуалă-демократилĕ çĕршывсен правитĕлствисем фашисла провокацине хирĕç кĕрешес ĕçре калама çук вăйсăр та хăйусăр тăраççĕ. Вĕсенчен хăшпĕрисем, хăйсен тирне çăлса хăварас тесе, вăрçă хăрушлăхне Совет Сойузĕ çине тĕртсе йама та хатĕр. Çавна пĕр самантлăха та манма йурамаст.

Совет правитĕлстви тăтăшах çирĕп политикă, мир политики тытса пырат. Çав политикăна пула совет халăхĕ вунултă çул хушши ĕнтĕ мирлĕ условисенче пурăнат.

Кам çĕнĕ вăрçă пуçлама васканине Совет Сойузĕ лайăх пĕлсе тăрат. Камăн ури айĕнче хăйăр йухат, çавă вăрçă вăрçма васкат. Совет Сойузĕн лару-тăрувĕ ун пек мар, çавăнпа вăл çине тăрса миршĕн кĕрешет. Фашисла государствăсем „ССР Сойузĕн мирлĕ политикине хирĕç иккĕн йе виççĕн вăрçăлă сойуз тунипе ответлеççĕ. „Ăна çапла тăваççĕ:—тет Молотов йулташ,—ÿкес мар тесе, иккĕн алран-ал тытаççĕ, иккĕн, виççĕн, тен, тăваттăн та, паллах, харпăрхăйсен вăйĕсене ĕненменнисем ĕнтĕ, алран-ал тытаççĕ. Анчах вĕсем, алран-ал тытса, хăйсене хайхи хăрушлăхран çăлаймаççĕ, вĕсен ура айĕнчи никĕç çухалсах пырат“.

Совет Сойузне вăрçă кирлĕ мар. Ăна пурте пĕлеççĕ. Вăл мир ĕçĕшĕн кĕрешнĕ, кĕрешет те. Анчах вăрçă пулас-мĕн пулсан, Совет Сойузне хирĕç вăрçăпа тапăнса килес-мĕн пулсан, мĕн пулĕ? „Çавна хирĕç епĕр калама . пултаратпăр:—тет Молотов йулташ,—Совет Сойузĕ çине вăрçăпа тапăнас-мĕн пулсан, тапăнаканĕ пирĕн хурçă хÿтлĕх вăйне те, пирĕн çĕршыв тулашĕнче инçете сутатакан рубинла совет çăлтăрĕсен суттин вăйне те курĕ“.

Çуракине хатĕрленеççĕ

ЕЛĔК. Изванкă йалсоветне кĕрекен Йăружкă йалĕнчи „Челуськин“ колхозра çитес çуракине хатĕрлеме тытăнчĕç. Çуракине хатĕрленес ĕçе колхоз председателĕ Иванов йулташ тивĕçлипе йĕркелесе пырат.

Колхоз чи малтанах вăрлăх хатĕрлеме тытăнчĕ. Пăрса 3 центнер, йасмăк—2,40 цент., тулă—10,4 цент, вика—16,5 цент., пăри—7,20 цент., кантăр вăрри 3,8 цент., сĕлĕ 59 центнер уйăрса хунă. Агрономсем кăтартнă тăрăх, колхоз хăй уйăрса хăварнă 59 центнер сĕлĕ вăрлăхĕ акма йурăхсăр, çавăнпа сĕлĕ вăрлăхне урăх колхозпа улăштармала. Анчах колхозра ку ĕçе туман-ха, мĕншĕн тесен районри çĕрĕç пайĕ çав вăрлăха ăçта кайса улăштармалине халь те кăтартса паман. Клевĕр вăрлăхĕ 1,6 центнер çитмест.

„Ăна пайан-ыранах тупса хатĕрлесе хуратпăр“,—тет колхоз председателĕ Иванов йулташ.

Уйа кантăр вырăнĕ çине лаша витинчен кашни кунах тислĕк кăларса купалаççĕ. Купана агротехника кăтартнă тăрăх лайăх таптаса, тирпейлĕн купалаççĕ. Уйа йур ытларах тытса йулас тĕлĕшпе кăçал çатраксем касса шчитсем тăваççĕ.

Колхоз лашисем вальĕн апат çителĕклĕ хатĕрлене. Пĕтĕмпе тĕштырăсем 219 центнер, утă 234,80 центнер тата çуртри уламĕпе ыраш уламĕ 860 центнер пур. Весем колхусен алинче.

Йалхуçалăх машинисем йусавлă. Çĕре пайавсем, туртисем кирлĕ таран пур. Йалхуçалăх машинисемпе ытти ĕçхатĕрсене йур кĕмен сарайсене вырнаçтарса лартнă.

Ф. Филиппов.

Колхоза кĕреççĕ

ВĂРНАР. ССР Сойузĕн Аслă Советне çĕршывăн шанчăклă ывăлĕсене депутата суйлани пĕтĕм ĕççыннисене партипе правительство тавра татах та тачăнтарах пĕтĕçтерчĕ, вĕсен активлăхне хăпартрĕ. Çак туйăм, хаваслăх уйрăм хуçалăхра пурăнакан хресченсене те пĕрлешулĕ хуçалăха йуратассине вăйлатрĕ.

Çакна пула çак йулашки кунсене Малтикасра 2 хуçалăх, Кĕлкеринче 1 хуçалăх, Одикавăра 1 хуçалăх сĕнĕрен колхоза кĕчĕç.

Ст. Улангай.

ЕЛĔК. Тавăтри „Сталинит“ колхоза çак кунсенче çĕнĕрен 3 йединоличник кĕчĕç.

Маркелов.

Çĕмĕрлесем тупăшсене валеçме васкамаççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. Колхозсем кăçал тĕштырăсем тăрăх районĕне вăтам шутпа кашни гектартан 16 центнер тухăç илчĕç.

Колхозсем умĕнче тăракан тĕп задачăсенчен пĕри вăл, йалхуçалăх çулне вĕçлесĕ тĕле, кăçалхи тырпулсемпе тупăшсене колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх тĕрĕс валеçсе парасси пулат.

Анчах та, Çĕмĕрле районĕнчи колхозсенче колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх тырпул валеçсе парас ĕç чăтма çук вараххăн пырат. Райçĕрĕç пайĕ йенчен çак ĕçе тататкăй йĕртсе пыни çук. Халь районри 42 колхозран пĕр „Красный акмал“ колхоз çеç тырпулсемпе тупăшсене валеçме туна ведамăçе çĕрĕç пайĕнче çирĕплетнĕ.

Колхозсене тырпулсемпе тупăшсене валеçмели ведамăçсене тăвас ĕçре пулăшма çĕрĕç пайĕнчен 11 работник, районри колхоз шкулĕнчен 27 курсант кайнă. Вĕсем те колхозсенчен нимĕнле резульгатсăрах таврăннă.

Çĕрĕç пайĕн пуçлăхĕ С. Стафик йатарласа „Борец“ колхоза колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх тырпулсемпе тупăшсене валеçсе парассипе кайнă. Вăл унта колхозниксемпе пуху туса иртернĕ. Тепĕр куннех çĕрĕç пайне килсессĕн унчченах маса те кайнă. „Борец“ колхоз пайанхи куна та тырпулсемпе тупăшсене валеçмели ведамăçе туса çĕрĕç пайĕнче çирĕплетмен. „Красноармеец“, „Красный пахарь“, Сталин йачĕпе тăракан тата „Комбинат“ колхозсем халь те авăн çапса пĕтермен. Кунта колхоз председателĕсен авăн çапса пĕтерсе тырпулсемпе тупăшсене хăвăртрах валеçсе парас ĕçре чармантарса пыраççĕ.

Чылай колхозсенче авăн çапса пĕтерни 2—3 эрне çитет. Анчах колхоз счетоводĕсемпе ревизи комиссийĕсем çителĕксĕр ĕçлени ĕç вăраха кайса пырат. „Коминтерн“ колхоз кăçал пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕ. Авăн çапса пĕтерни уйăх та çитет ĕнтĕ. Анчах тырпул валеçес ĕçе пайан куна та тытăнман. Ревизи комиссийĕ те нимĕн те тумаст. Районра кун пек çĕрĕк ĕçлесе пырас йалана тĕппипех пĕтермеле.

Т. Миронов.

Тупăшсене валеçеççĕ

Йускассинчи (Елĕк р.) „Социализм“ колхоз кăçалхи çул кашни гектар пуçне 120—130 пăт тĕштырă туса илчĕ. Кашни ĕçкунĕ çине çурмар пăт тĕштырă тивет. Н. Лукин, Трофимов колхозниксен çемйисем 400-шер пăт тырă илесçĕ. Колхоз халĕ тырпулсемпе пахча-çимĕçсене ĕçкунĕсем тăрăх валеçме тытăнчĕ.

И. М.

Хаçат-журналсем çыранаççĕ

ШĂХАСАН. Кăшнарӳйĕнчи „Прожектор“ колхоз членĕсем çĕнĕ 1938 çула пуртe хаçатсем çыранса илчĕç. Пĕтĕмпе кунта 117 экземпляр хаçат килме пуçлат.

Л. Шаков.

ÇĔРПӲ. Ойкас йалсоветĕнче ĕçлекен пиçмоносец Никифоров Константин çĕнĕ çула хаçатсем 87 екземпльяр, журналсем 39 екземпльяр, пĕтĕмпе 1690 тенкĕлĕх çарчĕ. Никифоров колхозниксене çыранса илме хаçат-журналсене вăхăтра, тĕрĕс илсе килсе тăрат. Матвейев.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧИ: Алексей Стаханов портречĕ. (Б. Рйазски художник „Индустрия социализма“ выставка валли туна).

(Сойузфото).

Тырпул маçтăрĕ

Иртнĕ хĕлре, 1937 çулта Çĕнĕ Шелттемри „Хĕрлĕ çăлтăр“ колхоз членĕ (Канаш р.) Владимиров Петр колхозниксен аслă пухуйĕнче Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх аслăлăхĕсен В. И. Ленин йачĕпе тăракан академин пĕрчĕлĕ тырă секцийĕн сарлака пленумĕ мĕн пур колхозниксемпе колхозницăсене, совхозсенчи рабочисене, агрономсене, аслăлăхра тата çĕрĕçĕнче ĕçлекенсене чĕнсе каланине сӳтсе-йавнă чухне пĕр çăмахне сиктермесĕр тĕплĕн илтесе ларатчĕ. Çавăн вăхăтĕн колхоз, йалсовет председателĕсен, бригадирсен, звеньевойсен районри пухуйĕнче (февралĕн 2-мĕшĕнче) 56 çулхи старик Владимиров Петр кашни гектартан 200-шер пăт тыра туса илме обьязательство илчĕ. Çав кунран пуçласа вăл вăйла тырпулшăн хастарлăн кĕрешме тытăнат.

Февраль уйăхĕнчех 3 гектар çĕр уйăрса илет те, унта 15 лав фекалин, 23 лав çĕрĕк тăпри уйа кăларат. 19 лав мулчча сармашкăн улăм тураса хатĕрлесе хурат. Хăй вăл мĕнле майпа вăйлă тырпул туса илмели çинчен агрокружока пĕр сиктермесĕр çӳресе лайăх вĕренсе пырат. Йур кайнă хыççăн çĕр пиçсе çитнипе çитменнине кашни кунах уйа тухса тĕрĕслесе пырат. Апрелĕн 14-мĕшĕнче такнă тислĕксене салатса тухат. Çĕр пиçсе çитнине сăнаса хыççăн апрелĕн 16 мĕшĕнче 18—19 сантиметр тарăнĕш сухаласа „Диппе“ сĕлĕ акат. Тепĕр кунах 8—10 сантиметр тĕршшĕ турана улампа мулчировани тăват. Вăрлăхне 6—7 кун хушши шывпа йĕпетсе вырта́рнă. Калчасем хăвăрт, пĕр тикĕс шăтса тухаççĕ.

Уйри тырпулсем çинĕ çумкурăк тухма пуçласан, Владимиров хăйĕн участки çинчи çумкурăксене çумлаттарма тытăнчĕ. Малтанхи хут ийунĕн 1—2-мĕшĕсенче, иккĕмĕш хутне ийунĕн 8-мĕшĕнче, виççĕмĕшне ийунĕн 15-мĕшĕнче çумкурăксенчен тасатса пынă. Кайран сĕлĕ калчи ӳссе кайсан çумкурăк айала йулса путлавчĕ. Сĕлĕн вăрăмĕшĕ пĕр метртан кайи пулман.

Вырса пӳстарса итеме кӳртсе çапса тасатнă хыççăн 103,5 центнер тутă сĕлĕ амбара хывреçĕ. Çапла вара, кашни гектартан 34,5-шер центнер тухрĕ. Çапса тасатса виçнĕ хыççăн, Владимиров Петр çапла каларĕ:

— Епĕ 56 çула çитсе те 60—65 пăт тыра туса илмен, шутлама та пултарайман. Кăçал çине тăрса ĕçлерĕм те, чăн та вихăçан пулман 207 пăт сĕлĕ туса илтĕм.

Владимиров 1938 çулта гектартан 300 пăт туса илетĕп, тесе тăрашат.

Сталинла вунăкунлăха малала тăснине ырлаççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. Декабрĕн 18-мĕшĕнче „Большевик“ заводри рабочисен пухуйĕ пулса иртрĕ. Завод директорĕ Шустин йулташ Аслă Совет суйлавĕн итогĕсем тата 1938 çулта завод умĕнче тăракан задачăсем çинчен доклад туса пачĕ.

„Большевик“ завод декабрĕн 3-мĕшĕпе 13-мĕшĕ хушшинче стахановла рекордсен сталинла вунăкунлăхне иртерчĕ. Вунăкунлăх аванах иртрĕ. Рабочисем Аслă Совета суйламали куна ĕçре çитĕнӳсем туни не кĕтсе илчĕç. Завод вунă кун хушшинчи плана 108 процент тултарчĕ (пĕрремĕш кварталти планпа танлаштарсан 113 процент шуттлат).

Сталинла вунăкунлăхра 1—3—4-ш бригадăсем плана 109 процент ытла тултарса мала тухрĕç. Диффузорщик Жестков йулташ екстракт йухтарассипе çĕнĕ рекорд турĕ. Вăл, декабрĕн 3-мĕшĕнче пĕр йăвăç диффузирен 340 килограм екстракт кăларнă. Кун пек çитĕнӳ завод ĕçĕ кайнăранпа та пулман.

1938 çулта завод умĕнче татах та пысăк задачăсем тăраççĕ. Кăçалхи планран 15 процент ытларах продукци туса кăлармалла. Кунсăр пуçне тата чĕртавар (сырьо) растутлассине чакарса, ĕç тухăçлăхне чылай хăпартмалла.

Рабочисем, 1938 çулта стахановла йухăма татах та вăйлатса йарассишĕн мĕн пур вăйа хурса ĕçлеме пулчĕç. Пухура йышăннă резолюцире çапла калана:

„Епĕр, „Большевик“ заводри рабочисем, Аслă Совет суйлавĕн итогĕсене, Аслă Советăн пĕрремĕш депутачĕ Сталин йулташ суйланнине пысăк хавасланса хĕпĕртесе йышăнатпăр. Çавăн пекех епĕр, коммунистсемпе партире тăманисем блокĕн çĕнтерӳвĕшĕн, хамăр округ тăрăх Аслă Совета Чкалов, Краснов, Новиков йулташсем суйланнăшăн савăнатпăр.

Сталинла виççĕмĕш пиатилеткăн пĕрремĕш çулне çĕнĕ çĕнтерӳсем туса кĕтсе илессишĕн декабрĕн 1-мĕшĕнче пуçланнă стахановла рекордсен сталинла вунăкунлăхе йанварĕн 1-мĕшĕн таснине ырласа ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума, троцкисла-бухаринла, буржуалла национализм сĕлен-калтасĕне пĕтерсе пыма, революцилле сисĕмлĕхе вăйлатма пулатпăр...“

Халĕ рабочисем хăйсен çăмахне тухăçлă ĕçпе пурнăçласассишĕн кĕрешĕве вăйлатсах пыраççĕ.

Пирĕн шкулсенче

СЕНТĔРВĂРРИ. Сичĕ Пӳтри туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем фотокружок организацилерĕç. Кружока С. Семйонов учитĕл йертсе пырат. Ачасем фотографи ĕçне интереслесе вĕренеççĕ.

В. Васильев.

ПЕТЕРНЕ. Пушнарти туллимар вăтам шкулта ĕçлекен учителсем пурте коммунисла партин историне вĕренмели кружокра тăраççĕ. Кружок занятисем йĕркелĕ пулса пыраççĕ. Политвĕренӳ ĕçĕ çакăн пек йаланах пынине курĕ, кружока Кăтаçри тата Алексейевкăри учителсем те çӳреме пуçларĕç.

Ф. Колдов.

ПАТĂРЙЕЛ. К. Сĕрпӳелĕнчи шкулăн 7-мĕш класĕнче вĕренекен отличник Йагудин Николай музыка, изобретательства ĕçне йуратат. Вăл хăй аллипе балалайкăсем, фото-аппаратсем тăват. Çапла Йагудин хăй туна балалайкăпа тĕрлĕрен кĕвĕсем 150 йахăн выляса пама пултарат. Халĕ Йагудин хăй килĕнче радио лартма хатĕрленет.

И. Улангин.

ЕЛĔК. Йускасси вăтам шкулĕнче вĕрену çулĕ пуçланнăранпа пĕлтерĕш политинформацисем пулса пыраççĕ. Политинформаци ачасен тавракурăмне ӳсма, политикăла пĕлӳлĕхе ӳстерме пулăшат. Информаторсем хăйсен ĕçĕнче куллен килсе тăракан хаçат-журналсене усă кураççĕ.

И. Маркелов.

Çутĕç Халăх Комиссариачĕн ĕçри „çавăрăнĕçне“ кăтартакан хăшпĕр тĕслĕхсем

Шупашкарти педучилищă пирки епĕр вĕренӳ çулĕ пуçланичченех, август уйăхĕнче, çыртăмăр. Çутĕç Халăх Комиссариачĕ ун чух заметкăра кăтартнă çитменлĕхсене кĕскĕ вăхăтрах пĕтерме çăмах пачĕ. Преподавательсем тупатпăр, студентсем валли общежити пулат, çутă кӳртсе паратпăр, столовăй пулат, тесе пĕлтерчĕç пире ответлă çынсем. Унтанпа ĕнтĕ 4 уйăх та иртрĕ. Çапах та педучилищăри хăлаблăсем халĕ малтанхи пекех килеççĕ. Епĕр жалабăсене Çутĕç Халăх Комиссариатне йарса, вĕсем тăрăх тивĕçлĕ мерăсем йышăнма ыйтнă. Анчах Çутĕç Комиссариатĕнчи çынсем вĕренекенсен хускавлă сассине илтмеççĕ. Вĕсем пире тăватă уйăх кайарах пана ответсенех ответлеççĕ. Акă декабрĕн 13-мĕшĕнче килнĕ хутра Çутĕç Халăх Комиссарĕшĕн ала пуснă Д. Трофимов йулташ çапла çырат:

„...Вĕренӳ ĕçĕ çине çителĕклĕ çавăрăнса пăхмала“ йатла заметкăра кăтартнă фактсем тĕрĕс. Студентсен общежитине тăвăр. Çутă—красин ламписем кăна. Педучилищă çумĕнче столовăй çук. Общежитипе столовăй пирки хула советĕ умĕнче çывăх кунсенчех ыйту хускатма хушнă...“

Ку хута вуласан епĕр пĕлтĕмĕр: пирĕн ку тарниччен шанса пурăнни ахалех пулнă. Çутĕç Комиссариачĕнчи бурократсем ыйтава халь тин „хускатма“ хатĕрленеççĕ мĕн?!

Тĕлĕнмели çук, мĕншĕн тесен, кун пек тĕслĕхсем çутĕç органĕсен практикинче тăтăшах пулкалаçа пыраççĕ.

Нумай пулмаст Йĕпреç районĕнчи Хирти Йăвăш шкулĕнче ĕçлекен учителсем çырăвĕ килчĕ. Вĕсем, хăйсен туллимар вăтам шкулĕнче вырăс чĕлхипе литературăна вĕрентекен преподавател çук, тесе ӳпкелешеççĕ. Çур çул иртрĕ, шкулта пит кирлĕ предмет—вырăс чĕлхи вĕренмесĕр йулат. Вырăс чĕлхисĕр вĕренекенсем ытти предметсене те йăнлама çук.

Çутĕç Комиссариачĕ кунта та „заметка тĕрĕс. Çутĕç комиссариачĕ, работниксем çитмен пирки, Хирти Йăвашри туллимар вăтам шкула вырăс чĕлхипе литературă вĕрентекен преподавател тупса йарайманĕ.

Май пулсассăн, Çутĕç Комиссариачĕ çийĕнчех тивĕçлĕ работник тупса йарат“, тесе пĕлтерет.

Çак-ши ĕнтĕ çутĕç органĕсен кашни уйрăм шкулпа тимлĕн ĕçлени?

Ишлей районĕнчи Варпуç йалĕнчи, комсомолец В. Семйонов, çак вĕренӳ çулне кĕрес умĕн вĕсен йалĕнчи пуçламăш шкула хупнине çинчен пĕлтерет. Епĕр кун пирки Çутĕç Комиссариачĕнчен хут йарса ыйтрăмăр, ответ пулмарĕ.

Варпуç шкулĕнче Варпуçĕпе Ункăпуç йал ачисем вĕренни. Анчах шкула пăхмасăр çулсерен йапăхтарса пына. Ишлей районĕнчи çутĕç пайĕ ăна йусас, çирĕплетес вырăнне, йулашкинчен хупса хурат. (Хупма йусасассинчен çăмăлтарах-çке-ха!). Ку йапала Варпуç ĕççыннисене чĕререх кӳрентерĕ. Вĕсем шкула тепĕр хут уçма ыйтаççĕ.

Çуллахи вăхăтра пулса иртнĕ актив пухăвĕсенче, конференцисенче учителсем çутĕç органĕсен ĕç йĕркисене хытăн критикларĕç, малала ĕçлеме çывĕ кăтартусем парса хăварчĕç. Çапах та Çутĕç Комиссариачĕн аппарачĕ йăварлăн çавăрăнкалат. Унти работниксем пурнăçран ытларах — заметкăсем тĕрĕс,—тесе ларма йуратаççĕ.

Совет çĕршывĕн чиккисенче

ССР Сойузĕн чиккисем вуншар пин километр тăршшĕ. Чиккĕсем çулĕ сăрт-тусем, сĕм вăрманĕсем урлă, йухаишывсемпе тинĕссем хĕррипе тăсăлса выртаççĕ. Шпионсемпе диверсантсем пĕрерĕн те, ушкăнăн та чикĕ урлă каçма пĕр хут анчах мар хăтланнă, халĕ те хăтланаççĕ. Вĕсем, хăйсен сăтăрлă ĕçĕсене тăвас тесе, Совет Сойузне шала кĕресшĕн.

Шпионсемпе диверсантсем маскировкăн чи чее те киревсĕр мелĕсемпе усă кураççĕ. Çапла пĕрехинче пирĕн йенне йупланса пĕтнĕ çын чупса каçнă. Унăнне чĕрнисене хăйпăтнă, ӳтне касса пилĕк вĕçĕ сăлтăр тунă. Вăл йĕрнĕ, мана пулăшу парăр, фашистсем асаплантарнинчен çăлăр, тенĕ. Çавăн пек çынна ĕненмеле пекех туйăнна. Анчах çав çын тăшман пулнă. Унăн чĕрнисемпе тирне хирург йурийех касна пулнă. Вăл йурийех ăна хĕсĕрленĕ пек туса кăтартнă. Совет чикки урлă вăл хăйĕн фашисла хуçисенчен шпионла заданисем илсе каçнă.

Совет халăхĕн интернационаллă туйăмĕсем вăйлă,—совет халăхĕн çав туйăмĕпе усă курса улталас тесе фашисла охранкăсем пит çунаççĕ. Анчах вĕсен çавăнтан сахал мар киревсĕр мелсем урăх та нумай. Вĕсем сутăн илес мелсемпе, провокацие, улталава, хăратупа усă курнине пурте пĕлеççĕ. Тата тăшмансем хĕспăлай вăйĕпе чикĕ урлă каçма хăтланнисене те пурте пĕлеççĕ.

Тăшман тем тĕрлĕ мелсемпе хăтлансан та ăна çĕмĕрсех пыраççĕ. Ăна çĕмĕреççĕ, мĕншĕн тесен совет чиккисене паркомунделльсем, Хĕрлĕ Çар сыхлаççĕ; совет чиккине хăйула, тусĕмле, пуçарулă çынсем, тата, чи пахи—хăмăрăн аслă тăван çĕршывăн чиккисене йулашки йун тумламĕ йулмиччен сыхлама хатĕр çынсем тăраççĕ. Тăшмана çĕмĕреççĕ, мĕншĕн тесен ССР Сойузĕн чиккисене пĕтĕм совет халăхĕ—çамрăксемпе ваттисем те—сыхласа тăрат.

Йышлăраххăн пулнă тăшманпа çапăçна чухне паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ Андрей Коробицын, Валентин Котельников, Семен Лагода йачĕсене кашни ĕççыни асра тытат. Пограничникин-геройсене—Агейев, Полковниченко, Шамстудинов, Нудный йулташсене тата ыттисене нумайĕшне ĕççыннисем пит анлăн пĕлсе тăраççĕ. Агейев йачĕ—тĕрĕллĕ йат пулса тăчĕ. „Тăшмана Агейев пек çĕмĕрмеле“ тесе калакан совет халăхĕн шухăшне пулăмне тăрат, вăл ĕнтĕ пит хăйула пулмилне, тăван çĕршывшăн пĕтĕм чĕререн тăмалине пĕлтерет.

Совет чиккисене сыхласа, Агейев йулташ кăçал çирĕп чекист пулнине тата вăл нимрен хăраман командир пулнине. кăтартрĕ.

1936 çулхи йанварĕн 30-мĕшĕнче Агейев йулташ йĕртсе пынă пысăк мар отрйад пирĕн çĕр çине йапонь-манчжурсен колонни каçнине курнă. Пограничниксем, Агейев йулташ команда парсанах, йапонь-манчжурсем темиçе хут нумайраххăн пулнине пăхмасăр тăшман çине атака тунă, вĕсене хытă çĕмĕрсе совет çĕрĕ çинчен кăларса ывăтнă. Кăкăрĕнчен пуля лексе йывăр тӳнă пулин те, Агейев йулташ строй рах йулнă, çапăçува йĕртсе пыма пĕр минутлăха та чарăнман.

Тăшмана Агейев пек çĕмĕрме пит сыхă, тăшман сасартăк килсе кĕресси ăна çĕмĕрсе тăкма кашни минутрах хатĕр пулмала. Пограничникĕн йăвăç çулçи кăшăртатнине те, шыв кăштах шăмпăртатнине те, чул ӳкнине те, курăк пусăраннине те, ахăр ытти вуншар пĕчĕк палласене, ахăр çын çавăрăнса та пăхман палласене, асăрхат, çавсене асархасанах вăл çивĕччĕн пăхат, çивĕччĕн итлет. Пограничникăн тăшман йĕррисене палласа илме ăçта пулсассăн та пекех пекех пулмала.

Иртнĕ çулхи кĕркунне чикĕри Кйахтински отрйадри пограничник Колосков Степан, дозорта чухне, йулташĕсемпе пĕрле чикĕ тăрăх йуланутпа пынă. Ăç ирхине ирех пулнă. Пĕчĕк çырма урлă каçнă чухне Колосков йулташ курăк пусăраннине асăрханă. Ку вăл ахальрен мар, тесе шухăшлана Колосков йулташ. Вăл лаша çинчен сиксе аннă та пирĕн çĕрĕпе йĕнеле килекен йĕре тĕплĕн сăнанă. Пограничниксем йĕре сăнаса сăрт-тусем урлă вунă километр кайнă. Боецсем хăйсем тата лашисем те пит ывăнса çитнĕ, мĕншĕн тесен вĕсем унчченех йăвăр çула кайса килнĕ пулнă. Йулашкинчен йĕр вăрманти пĕр хушше илсе пынă. Пограничниксем çавăнта чикĕ урлă каçнă икĕ çынна тытса, вĕсене заставăна илсе пынă.

Хелăх пограничникĕсем йуратат. Пограничниксем чылайĕшĕ—Агейев, Петров, Лебедев, Абрамов, Май, Сурадзе йулташсем т. ыт. те—ССР Сойузĕн Аслă Совет депутачĕсем. Çамрăксем нумайĕшĕ пограничник пулас тесе ĕмĕтленеççĕ. ССР Сойузĕнчи Октябрти социалисăмла асла рев-люци çирĕм çул тултарас умĕн „Комсомольская правда“ хаçат Мускаври Сталин йачĕпе тăракан автозаводри çамрăксен хушшинче анкетă тунă. Анкетăсене 791 çын тултарнă. Вĕсенчен 140 çын—„Есĕ кам пулас тетĕн“ текен ыйту çине: пограничник пулас тетĕп, мухтавлă Хĕрлĕ Çарта пулас тетĕп, тесе ответ пана.

Чикĕ çывăхĕнчи йалсенчи колхозниксем—ӳсисем те, старикsемпе ачасем те—наркомвнуделецсемпе пит туслă пурăнаççĕ. Вĕсемпе пĕрле колхозниксем совет çĕршывне сыхлаççĕ.

Нумай пулмаст чикĕри Заславль отрйачĕн участкинче унта пурăнакан Адамович чикĕрен инçе мар выранта палламан хĕрарăма тĕл пулнă.

—Есĕр кам пулатăр?—ыйтнă вăл хĕрарăмран.

— Епĕ Мускавран упăшка патне килтĕм, укса сухатрăм та ниепле те тупайманстăп-ха,—тенĕ хĕрарăм.

Ку хĕрарăм ахаль çын мар пулмалла, тесе шухăшлана Абрамович. Вăл унтан документсем кăтартма ыйтнă. Хĕрарăм документсем кăтартман. Вара Абрамович хĕрарăма тытса чарнă та чикĕри отрйадăн штабне илсе пынă. Çав хĕрарăм чикĕ урлă каçса килнĕскер, пĕр урăхçĕршыв государствин кваликацийле шпионĕ пулнă мĕн.

Хĕвеланăçĕнчи чикĕ патĕнче шкул ачисем—тăхăр çулхи Володйа Котман, вуннĕр çулхи Вита Барышевич, вунă çулхи Ольа Маторос уйра выляна чухне йăвăç тĕми хушшинче икĕ палламан çынна асăрхана. Палламан çынсем вĕсене чĕнсе илнĕ те çул ыйтма пуçланă. Шкул ачисем çул çинчен çывăхра кĕтӳ пăхакан кĕтӳçĕрен ыйтса пĕлме сĕннĕ, хăйсем чикĕ патĕнчи заставăна палламан çынсем çинчен пĕлтерме чупнă. Колхоз кĕтӳне пăхакан Андрей Кошман хăш çула ăçтан каймаллине йурийех нумай вăхăт хушши калана, çапла вăл палламан çынсене пограничниксем пыриччен тытса тăна. Чикĕ урла каçнă çынсене заставăна илсе кайнă.

Тата тепĕр ĕç çинчен каласа парăпăр. Хĕвеланăçри чикĕрен инçе мар уйра колхозниксем ĕçленĕ. Йăвăç тĕмисем хушшинчен çуланкана пĕр палламан çын тухнă. Ана Марина Моторос асăрханă. Вăл ĕçлеме чарăннă та палламан çын патне утса кайнă. Ун хыççăн Йефимийа Раковецка Йевдокийа Русайа пынă. Палламан çын патне çитсен Марина ыйтнă:

— Есĕр ăçтисем пулатăр?

— Мана йăл кирлĕ, анчах епĕ çулне мантăм,—тенĕ палламан çын.

— Кайăпăр, пичи, епĕр сана ăсатса йарăпăр.

— Çук, есĕр мана çул кăтартса йарăр, йалне епĕ хам та çитетĕп.

— Епĕр те йала кайатпăр, пĕрле кайапăр.

Вара палламан çынăн колхозницăсемпе пĕрле каймалла килнĕ. Çул çинче вăл йăвăç тĕмисем хушшине сике пăхнă. Анчах колхозницăсем ăна тарма паман. Чăсах вĕсем пограничниксен дозорне пĕр тĕл пулна та, хăйсем тытса çынна дозор аллине пана. Тытна çын йутçĕршыв разведкин агенчĕ пулнă.

Çапла совет халăхĕ хăйĕн çĕршывĕн чиккисене мĕлӳнлишер куçсемпе асăрхаса тăрат. Шалти ĕçсен халăх комиссариачĕн органĕсене, мухтавлă пограничниксене социализмăн тăван çĕршывне сыхлама совет халăхĕн ĕçре çыхă пулса хурăллама пулăшса тăрат.

(ТАСС).

ВЧК—ОГПУ—НКВД 20 çул тултарни

Чăваш АССР Шалти ĕçсен халăх комиссариатĕнче ĕçлекен работниксен чаплă ларувĕ

Пĕтĕм Российăри Чрезвычайлă Комиссин йубелейĕ йачĕпе декабĕрĕн 19-мĕшĕнче каçхине Шалти ĕçсен халăх комиссариачĕн клубĕнче чаплă лару пулса иртрĕ. Çав ларура пирĕн Аслă Социалисăмла тăван çĕршыври ĕççыннисем халăхсен ăслă çулпуçне Сталин йулташа вĕçĕмсĕр йуратнине уççăн та вăйлăн демонстрацилерĕç. Ĕççыннисем сталинла Нарком Йежов йулташ йертсе пыракан пирĕн мухтавлă наркомвнуделецсене тăванла йуратса пăхнине кăтартса пачĕç. Лару пирĕн республикăри мухтавлă чекиссен отрйачĕ болъшевикла пĕтĕçсе тăнине, вĕсем ĕççыннисен интересĕсемшĕн, Ленинăн—Сталинăн аслă партин ĕçĕшĕн хăйсен пурнăçне те пама хатĕр тăнине кăтартакан демонстраци пулчĕ. Чаплă ларува Чăваш АССР Шалти ĕçсен халăх комиссарĕ Розанов йулташ уçрĕ.

Лару президиумĕнче парти Чăваш Обкомĕпе правителствă членĕсем, хиселлĕ чекиссем, промышленнăçпа йалхуçалăхĕнчи стахановецсем.

Хиселлĕ президиума халăхсен çулпуçне Сталин йулташа тата унăн соратникĕсене—ПСК(б)П Тĕп комĕн Политбӳро членĕсене суйлама панă сĕнӳве пуху тăвăллăн алă çупса йышăнат.

ВЧК—ОГПУ—НКВД 20 çул тултарни çинчен Розанов йулташ уçăмлă доклад туса пачĕ.

— Пирĕн аслă парти тата унăн генилĕ çулпуçĕ Сталин йулташ йертсе пынипе,—тесе калат йулашкинчен Розанов йулташ,—Шалти ĕçсен халăх комиссариачĕн органĕсем, сталинла Нарком Н. И. Йежов йулташпа пĕрле, ĕççыннисене аслă çĕнтерӳлĕ çулпа коммунисăм патне кайма чăрмантаракан халăх тăшманĕсене пурне те тĕппи тымарĕпех кăкласа тасатĕç.

Партин облăçри комитечĕн йачĕпе Обком секретарĕ Иванов йулташ тухса саламлат. Пролетари диктатурипе социалисăм строителствине тĕреклетес ĕçре ВЧК—ОГПУ—НКВД органĕсем калама çук пысăк ĕç тунине палăртса, Иванов йулташ çапла калат:

— Буржуазипе унăн агенчĕсемшĕн аçа-çиçĕм, рабочи класпа мĕн пур ĕççыннисемшĕн—çивчĕ хĕç шутланакан мухтавлă наркомвнуделецсем халăх тăшманĕсен тата вĕсен ирсĕр тарçисен сăпса йăвисене малашне те пĕр хĕрхенӳсĕр татăклăн çĕмĕрсе пырĕç.

Чăваш правителстви йачĕпе Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕн председателĕ Андрейева йулташ саламлă сăмах тухса каларĕ. Комсомолăн облăçри комитетĕнчен — ПСÇЛКС Обком секретарĕ Никифоров йулташ саламларĕ. Çавăн пекех тата Черновапа Шулъдйаков стахановецсем тухса каларĕç. Йулашкинчен наркомвнуделецсен республикăри отрйачĕн йачĕпе Исайев йулташ сăмах илет.

—ВЧК—ОГПУ — НКВД çирĕм çул тултарнă кун,—тет вăл, — пирĕн халăх комиссариатĕнче ĕçлекен сотрудниксен коллективĕ йачĕпе сире, Парти Обкомĕн представителĕсем тата сирĕн урлă Чăваш республикĕнчи пĕтĕм парти организацине, çавăн пекех сире те, ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн пирĕн депутатсем тата сирĕн урлă пĕтĕм чăваш халăхне çакăн çинчен шантарса калама ирĕк парăр: чи ответлă участкăсенчен пĕрине — пур тĕрлĕ контрреволюципе кĕрешме йарса, парти пирĕн çине—чекиссем çине мĕнле пысăк шанăç хунине епĕр йаланах асра тытса тăратпăр. Епĕр парти шанăçне тӳрре кăларатпăр. Халăхсен ăслă çулпуçĕ Сталин йулташ кăтартса панисем пирĕн практикăла ĕçре çул кăтартакан çутă çăлтăр вырăнне пулаççĕ. Çав кăтартусене чыслăн пурнăçа кĕртĕпĕр, тесе тупа тăватпăр.

Троцкисла-бухаринла тата контрреволюцилĕ ытти сволăчсем пирĕн çулпуççен пурнăçĕ çине, пирĕн заводсемпе фабрикăсем çине, пирĕн колхозсем çине, социалисăм çĕршывĕнчи мĕн пур ĕççыннисен пурнăçĕ çине алă çĕклеме хăтланнисене шанчăклă сталинец, хурçă Нарком, государствă хăрушсăрлăхĕн Генералънăй Комиссарĕ Йежов йулташ йертсе пынипе, вăхăтра сирсе йарăпăр. Çав контрреволюцилĕ çĕленсен йăхĕ хăйĕн ирсĕр ĕçне тума шутлаччĕнех ăна арпа-кĕрпе пек çĕмĕрсе тăкĕç.

Контрреволюципе кĕрешнĕ çĕрте Ленин—Сталин партийĕн ĕçĕшĕн, пирĕн социалисăмлă тăван çĕршывшăн епĕр хамăр пурнăçа та пама хатĕр тăратпăр, тесе тупа тăватпăр.

Сывă пултăр пирĕн хурçă Нарком, Сталин йулташăн шанчăклă соратникĕ Йежов йулташ!

Сывă пултăр мĕн пур ĕççыннисен тусĕпе учителĕ тата çулпуçĕ пирĕн аслă Сталин!

* * *

Йулашкинчен пуху халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ патне тата сталинла Нарком Йежов йулташ патне саламлă çыру йама йышăнчĕ.

Мускаври тата Мускав облăçĕнчи предприйатисенчи стахановецсен пухувĕ

Декабĕрĕн 17-мĕшĕнче Мускавра Сойузсен çуртĕн Колоннăлă залĕнче Мускаври тата Мускав облăçĕнчи фабриксемпе заводсенчи стахановецсен пухувĕ пулса иртнĕ. Пухува ПСК(б)П Мускав Комитечĕпе Мускав хула комитечĕ пуçтарнă. Ку пуху стахановла рекордсен сталинла декадин итогĕсене тата промышленнăçăн 1938 çулхи задачисене сӳтсе-йавнă.

Стахановецсем трибунă çине пĕрин хыççăн тепри улăхса, стахановла рекордсен сталинла декадинче тунă хăйсен ситĕнӳсем çинчен тата хăйсен предприйатисен коллективĕсен ситĕнӳвĕсем çинчен каласа панă. Хĕрлĕ столицăри тата Мускав облăçĕнчи фабриксемпе заводсенчи стахановецсем хăйсем болъшевиксен партине, халăхсен çулпуçне Сталин йулташа вĕçĕмсĕр йуратнине демонстрацилесе, декадă хушшинче социалисăмла ĕçтухăçлăхĕн чаплă тĕслĕхĕсене кăтартрĕç.

Куйбышев йачĕпе тăракан електрокомбинатăн нумай пин çынлă коллективăн çĕнтерӳвĕсем çинчен сборочнăй конвейерăн аслă мастăрĕ, А. Г. Йаковлев йулташ каланă.

— ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйламали хамăрăн кандидата—йуратнă тăван Сталин йулташа чысласа,—тенĕ Йаковлев йулташ,—Мускаври Сталинский суйлав округĕнчи суйлавçăсем стахановла рекордсен сталинла декадине организацилеме йышăнчĕç. Вĕсен пуçаруне Совет Сойузĕнчи мĕн пур ĕççыннисем хĕрӳлĕ йышăнса хутшăнчĕç. Електрокомбинат коллективĕ декадă хушшинче хăйĕн болъшевикла ирĕклĕхне, плана тата партипе правителствăн задашине тултарассишĕн кĕрешме пĕлнине кăтартрĕ. Вăл декадă хушшинче чаплă результатсем тума пултарчĕ—программăна ытлашшипех тултарчĕ тата стахановецсен ретне ӳстерчĕ.

Анчах та епĕр кӳшах лăпланса лармастпăр. Суйлавра коммунисемпе партире тăманнисен блокĕ чаплă çĕнтерӳ тунă йатна. Аслă Советăн пĕтĕм халăх суйланă пĕрремĕш депутачĕ — Сталин йулташ йачĕпе епĕр стахановла рекордсен сталинла декадине 1937 çула çĕнтерӳлĕ вĕçлесе çитерĕс тата сталинла виççĕмĕш пйатилеткăн пĕррремĕш çулне тивĕçлĕ кĕтсе илес майпа декабĕр уйăхĕ вĕçленичченех тăсма йышăнтăмăр. Епĕр 1938 çулхи йанвар уйăхне стахановла рекордсен сталинла уйăхлăхĕ тума йышăнтăмăр.

Йаковлев йулташ пухува пуçтаранисене електрокомбинат коллективĕн пуçаруне хапăлама чĕнчĕ.

Йаковлев йулташ чĕнӳне пурте пĕр шухăшлăн шавлăн алă çупса йышăннă.

Орджоникидзе йачĕпе тăракан станоксем тăвакан завод стахановецĕсен чаплă ĕçĕсем çинчен паллă фрезеровщик, ССР Сойузĕн Аслă Совет депутачĕ И. И. Гудов йулташ каланă.

— Пирĕн заводра,—тенĕ Гудов йулташ,—епĕр пĕчченшерĕн тунă рекордсенчен ушкăнлă рекордсем çине куçма, пĕтĕм цехсене стахановла ĕçлеттерме пуçлама хатĕрленетпĕр. Заводри чи лайăх стахановецсем пуçарнипе çитес сывăх вăхăтрах фрезеровщиксен ушкăнлă рекордне тума йышăнтăмăр. Епĕ хам декабĕрĕн 23-мĕшĕнче — хамăр завод пилĕк çул тултарнă кун—сменăри нормăна 6.500 процент тултарма обйазателствă илтĕм.

Хăйсен предприйатийĕсем стахановла рекордсен сталинла декади хушшинче тунă ситĕнӳсен рапорчĕсемпе Трехгорнăй мануфактурă фабрикĕн аслă инженерĕ Б. А. Сквиренко йулташ, Тушинори чăлха сыхакан фабрикă стахановки Т. А. Панфилова йулташ, „Електросталъ" заводăн сменă начальникĕ Аслă Совет депутачĕ В. С. Минайев йулташ, Лепсе йачĕпе тăракан заводри стахановец Н. А. Байуков йулташ, Л. М. Каганович йачĕпе тăракан Шарикоподшипник заводри токăр П. А. Смирнов йулташ, Мытищинскри вагонсем тăвакан заводри слесăр-стахановец И. Л. Крац йулташ, Коломнăри машинсем тăвакан заводăн аслă инженерĕ ССР Сойузĕн Аслă Совет депутачĕ В. А. Малышев йулташ тата паллă каменщик-орденоносец П. С. Орлов йулташ тухса каланă.

ПСК(б)П Мускав Комитечĕн тата Мускав хула комитечĕн секретарĕ Н. С. Хрущчев йулташ уçăмлă сăмах тухса каланă. Пухува пынисем Н. С. Хрущчев йулташа оваци туса кĕтсе илнĕ.

— Епĕ Мускаври тата Мускав облăçĕнчи стахановецсене, — тенĕ Хрущчев йулташ хăйĕн сăмахне вĕçленĕ чухне,—Ленин—Сталин партийĕн йалавĕ айĕнче, пирĕн никам çĕнтерейми болъшевиксен партийĕ тата халăхсен çулпуçĕ Сталин йул. йертсе пынипе партипе правителствă задашисене кăтартулă пурнăçа кĕртессишĕн, сталинла виççĕмĕш пйатилеткăна анăçлăн тултарассишĕн кĕрешес ĕçре çĕнĕрен те çĕнĕ çĕнтерӳсем тума чĕнетĕп.

Пуху Мускав болъшевикĕсен руководителĕ чĕннине тăвăллăн алă çупса ответленĕ.

Пуху промышленнăçпа транспортра ĕçлекен мĕн пур стахановецсем, рабочисем, инженерсем, техниксем тата служащисем патне чĕнӳ йама йышăннă.

(ТАСС).

Китай çарĕсем йапонцăсенчен тытса илнĕ позицисене сыхлаççĕ.

(Сойузфото).

„Дейли телеграф энд морнинг пост" хаçатăн суйа пĕлтерӳвĕ

УЛАН-БАТОР, декабĕрĕн 17 мĕш. Лондонри „Дейли телеграф энд морнинг пост" хаçат „Тулти Монголин çар комиççи членĕ—Тен Пин генерал—декабĕрĕн 14-мĕшĕнче Чан Кай-шипе канашлама Ханькоуна пырса, ăна Çурçĕр Китайра çар пулăшувĕ пама сĕннĕ", тесе çырнă. Кун пирки сирĕн корресподента питĕ лайăх ĕнентерекен источниксенчен çапла пĕлтернĕ: „Дейли телеграф энд морнинг пост" информацийĕ шухăшласа кăларнă провокацилĕ суйа хыпар çеç. Ку информацин суйи çакăнтан лайăх курăнат—Монголи Халăх Республикĕн çар йе государствă деятелĕсенчен Ханькоуна никам та кайман, Монголи çар министерствинче нимĕнле çар комиççийĕ те çук, çавнашкалах тата Монголин революцилĕ халăх çарĕнче Тен Пин генерал çук тата нихăçан та пулман.

(ТАСС).

Б. Д. Берман, В. А. Каруцкий, Й. Ф. Кривец, Г. А. Лупекин, Д. М. Соколинский, Н. Н. Федоров т. ыт. йулташсене наградăласси çинчен

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

Правителствăн кирлĕрен те кирлĕ заданийĕсене кăтăртулăн тата çине тăрса хăйулăн пурнăçа кĕртнĕшĕн ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ çакăн пек наградăсем памала тунă:

Ленин орденĕпе:

1. Борис Давыдович Бермана
2. Василий Абрамович Каруцкине
3. Йефим Фомич Кривеца
4. Герман Антонович Лупекина
5. Давид Моисейевич Соколинскине
6. Николай Николайевич Федорова
7. Павел Василйевич Чистова
8. Константин Николайевич Валухина
9. Григорий Сергейевич Хорохорина
10. Дмитрий Матвейевич Дмитрийева.

Хĕрлĕ йалав орденĕпе:

1. Сергей Павлович Гречкина
2. Петр Иванович Маггона
3. Сергей Александрович Никольскине
4. Иван Иванович Степанова
5. Василий Иванович Шигалева.

Хĕрлĕ çăлтăр орденĕпе 238 çынна наградăланă. Вĕсем хушшинче: Исаак Давыдович Абкин, Исай Йаковлевич Бабичь, Николай Николайевич Валухин, Иван Андрейевич Горбаленъ, Иван Николайевич Йевтушенко, Иван Андрейевич Жабрев, Николай Андрейевич Загвоздин, Владимир Станиславович Иванов, Иван Кириллович Лазарев, Федор Петрович Малышев, Сардсон Николайевич Надарай, Иван Иванович Островский т. ыт. те.

„Знак почета" орденĕпе 154 çынна наградăланă. Вĕсем хушшинче: Иван Илйич Антонов, Василий Михайлович Блохин, Александр Николайевич Войнов, Михаил Абрамович Гринштейн, Бе-Гирбек Урузбийевич Азнов, Михаил Александрович Журавлев, Михаил Семенович Зарубин, Анатолий Иванович Илйинский, Михаил Илйич Кузин, Иосиф Йаковлевич Лоркиш т. ыт. те.

(ТАСС)

Совет Сойузĕ тăрăх

★ ДНЕПР ШЫВĔ ÇИНЧЕ ПРАХУТСЕМ ÇӲРЕÇÇĔ. Çанталăк ăшăтса кайнă пирки Днепр шывĕ çинче прахутсем пĕр вăхăт чарăнса тăнă хыççăн тепĕр хут çӳреме пуçланă. Прахутсемпе грузсем турттарнисĕр пуçне пассажирсем те илсе çӳреççĕ. Йулашки кунсенче Кийĕвра уйрăмах ăшă çанталăк тăрат.

★ ПĂР АЙĔНЧЕН ПУЛĂ ТЫТМА ПУÇЛАНĂ. Ленинград облăçĕнчи кӳлĕсем çинче пăр айĕнчен пулă тытма пуçланă. Ильменскăри колхозсем пилĕк кун хушшинче лайăх пахалăхлă 404 центнер пулă тытнă. Пăр айĕнчен пулă тытас ĕç Архангельск облăçĕнче те пуçланнă.

★ ÇĔНĔ ÇУЛ ЙАРМĂРКИСЕМ. Минск хулинче çĕнĕ çул пасарĕ уçăлнă. Унта çĕнĕ çул таварĕсем сутаççĕ. Кунсăр пуçне хулара тата 10 пасар уçма палăртнă. Декабĕрĕн 25-мĕшĕпе 31-мĕшĕ хушшинче Белорус республикинчи 12 хулара районсем хушшинчи çĕнĕ çул йармăркисем пулса иртеççĕ.

★ ЗАОЧНĂ ВĔРЕНМЕЛИ ВĂТАМ ШКУЛ. Сталинградра заочнă вĕренмели виççĕмĕш вăтам шкул уçаççĕ. Заочнă вĕренме рабочисемпе колхозниксем пурĕ 2.800 зайавлени панă. Зайавленисем пуринчен ытла йалсенчен пыраççĕ.

★ САХĂР ЗАВОЧĔСЕН ĔÇĔ. Сахăр кăшманĕсем питĕ пысăк тухăçлă пулнипе тата сахăр завочĕсем лайăх ĕçленипе кăçал нихăçанхинчен ытларах сахăр туса кăларнă. Сахăр завочĕсен историнче 1935 çул чи рекордлă çул пулнă. Ун чух пурĕ 20,3 мĕлйун центнер сахăр туса кăларнă. Кăçал декабĕрĕн 10 мĕшнех 20,9 мĕлйун центнер туса кăларнă. Декабĕрĕн 15-мĕшне 189 заводран 33-шĕ çулталăк планне срукченех тултарнă.

★ КОЛХОЗНИКСЕН ХĔЛЛЕХИ ВĔРЕНӲВĔ. Куйбышев облăçĕнче колхозниксен хĕллехи вĕренӳвĕ пуçланнă. Çак çул хушшинче облăçри курссенчен 10.055 тракторис вĕрентсе кăларма палăртнă. Колхозсем валъли қадрсем хатĕрлес ĕçре тăкаклама пурĕ 25 мĕлйун тенкĕ уйăрса хунă.

★ ИВАНОВО ОБЛĂÇĔНЧИ пуйан та културлă пурнакан колхозлă йалсенче йулашки икĕ çул хушшинче 11 културă сурчĕ, 75 клуб тунă. Кашни колхозрах вулав çурчĕ пур.

★ МУСКАВРА декабĕрĕн 20-мĕшĕнче Пĕтĕм Сойузри пианиссен конкурсĕн иккĕмĕш турĕ пуçланат. Конкурсра 65—70 пианис пулаççĕ.

Суд приговорне ырлаççĕ

ТРАК. Тĕрер йалсоветĕнчи „Правда" тата „Буйга" колхоз членĕсен декабĕрĕн 16-мĕшĕнче пĕрлешӳлĕ пухувĕ пулса иртрĕ.

Вылъăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри тăшмансене: Спиридонова, Михопаркина Чăваш АССР Аслă Сучĕ персе вĕлермеле приговор йышăннине колхозниксен пухувĕ тулли кăмăлпа ырларĕ. Ст. Филиппов.

ТЕМТЕПĔР

Çимĕçсене шăнтса усрани

Микойан йулташ пуçарăвĕ тăрăх ССР Сойузĕн Çимĕç промышленнăç халăх комиссариачĕн консервă промышленнăç Тĕп управленийĕ пахча-çимĕçсене, фруктăсене тата çырласене питĕ хăвăрт шăнтса усрас майсене сарма йышăннă. Питĕ хăвăрт шăнтсан пахча-çимĕçсемпе фруктăсен тутисем пăсăлмаççĕ, усăлă йапалисем çухалмаççĕ тата вĕсен ăшĕнчи витаминсем те пĕтмеççĕ.

Халь Мускаври тата Ленинградри холодилъниксенче, консервă завочĕсем çумĕнче хăвăрт шăнтнă çимĕçсене сыхламали камĕрăсем тăваççĕ.

Хăвăрт шăнтнă пахча-çимĕçсем, фруктăсем тата çырласем çулталăк иртиччен сыхланса тăраççĕ.

(„Правда").

●

Авалхи документсем

Горьки облăçĕнчи истори архивĕнче 1774 çулта Пугачев восстанийĕ çинчен çырнă документсем тупнă. Документсем—Нижегородски-Алатырски свйащенник Антони патне Чулхула кĕпĕрнинчи свйащеннослужăщисем йанă çырусем. Вăл çырусенче Пугачев çарĕсем Чулхула кĕпĕрни тăрăх тунă походсем çинчен çырнă. Монастырсенчи монахсем тата пупсем Антони епископран „пăлхавçăсем" монастырсемпе улпутсен именийĕсене çĕмĕрсе сийен кӳнисене хресченсем çине налуксем хурса тавăрма ыйтнă.

Çак документсем историлĕ хаклă йапаласем пулса тăраççĕ.

(„Советская деревня").

●

Сайра пулакан йапала

Нумайах пулмаст, Мускаври ача çуратмали çуртра сайра пулакан йĕкĕреш хĕрсем çуралнă. Вĕсен икĕ пуç, тăватă алă, анчах хулпуçинчен айалалисем пĕр çĕрĕ пĕрлешнĕ. Пĕвĕ пĕрле тата урисем те иккĕ; ӳт-пӳвĕн айалали пайĕ йĕркелĕ çуралнă ачанни пекех. Хальхи вăхăтра çак хĕрачасене експериментлă медицинăн пĕтĕм Сойузри институчĕ ăслăлăх тĕлĕшĕнчен йатарласах сăнаса тăрат.

Хĕрачасем уйăх çурă пурăнаççĕ ĕнтĕ, лайăх çийеççĕ тата вĕсен йăвăрăшĕ те ӳссе пырат.

Çак сайра пулакан йапала ăслăлăх тĕлĕшĕнчен питĕ интереслă. Ĕнер хĕрачасене експериментлă медицинăн пĕтĕм Сойузри институчĕн физиологи лабораторинче тĕплĕн пăхнă, питĕ вак приборпа—осциллографпа вĕсен чĕри, мышцисем тата нервă çистеми мĕнле ĕçленине сăнанă. Хĕрачасем хăйсене мĕнле тыткаланине йăлтах кинофилъм çине ӳкерсе илнĕ. Вĕсене сăнаса пăхни, халех, питĕ кирлĕ, чылай проблемăсене татса паракан материал панă.

Малашне сăнаса тĕпчес ĕçĕн тепĕр серине—хĕрачасене сийенлемесĕрех организăмри нервăн гормонилĕ сыхăнуне пăхма шутлаççĕ. Йĕкĕрешсем патне уйрăм дежурствă тăратнă, вĕсене уйрăмăн пăхса тăраççĕ тата кашни сехетрех ăслăлăхлă сăнав ирттереççĕ.

Тĕнчери ăслăлăх практикинче çакнашкал йапаласем питĕ сайра пулаççĕ. Халиччен çаксем пек йĕкĕреш пĕрре пулнине çеç пĕлеççĕ. Анчах ăслăлăх йенчен ăна çителĕклĕ тĕпчемен пулнă.

П. Анохин профессор.

(„Правда"—18/XII—37).

ССР Сойуз Аслă Сучĕн Çар Коллегинче

1937 çулхи декабĕрĕн 16-мĕшĕнче ССР Сойуз Аслă Сучĕн Çар Коллегийĕ хупă суд ларувĕнче А. С. Йенукидзене, Л. М. Караханa, И. Д. Орахалашвилине, Б. П. Шеболдайева, В. Ф. Ларина, А. Д. Метелева, В. М. Цукермана тата Б. С. Штейгера, 1934 çулхи декабĕрĕн 1-мĕшĕнче тухнă саккун йĕркипе, тăван çĕршыва пăрахса тăшмана сутăннăшăн, терроrлă ĕçсем тунăшăн тата пĕр йутçĕршыв государствине усă кӳрес тĕлĕшпе йаланах шпионаж туса пурăннăшăн айăпламали ĕçе, урăхла каласан, РСФСР Уголовлă Кодексăн 56—1 а, 58—6-мĕш статйисенче кăтартнă преступленисемшĕн айăпламали ĕçе пăхса тухнă.

Айăпланакансем пурте хăйсен айăпĕсене йышăннă.

ССР Сойуз Аслă Совечĕн Çар Коллегийĕ айăпланакан А. С. Йенукидзене, Л. М. Карахана, И. Д. Орахалашвилине, Б. П. Шеболдайева, В. Ф. Ларина, А. Д. Метелева, В. М. Цукермана тата Б. С. Штейгера чи пысăк наказани парса—персе вĕлермеле приговор йышăннă.

Приговора пурнăçа кĕртнĕ.

(ТАСС).

—○★○—

СУД

Тăшманла ĕç

Кăçалхи нойабĕрĕн 30-мĕшĕнче Поганкă йалĕнчи (Вăрнар р.) колхозниксем суйлав участкин çуртĕнче „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положени" вĕренсе ларнă. Çавăнта Андрей Етриков ӳсĕр пуçĕпе пырса кĕнĕ те, заньати ирттерме чăрмантарма пуçланă. Колхоз председателĕ Петров тата Кондратйев йулташсем ӳсĕр çынна заньатиреn кăларса йама тытăнсан, Етриков вĕсене хирĕç çапма пуçланă, тĕрлĕрен усал сăмахсем каласа вăрçнă, „сире вĕлеретĕп" тесе хăратнă, пӳлĕмсене çĕмĕрме тытăннă. Етриков хулиган Националънăçсен Советне депутата суйлама Вăрнар суйлав округĕнчен тăратнă кандидатăн Пумпур йулташăн портречĕпе биографине пичетленĕ плаката чĕрсе тăкнă.

Етриков кунччен те обшчествăна хирĕçле тăшманла ĕçсем тукаланă. Октабĕрĕн 31-мĕшĕнче вăл колхоз клубĕн алăкне тата краçин лампине, чӳречесене çĕмĕрсе тăкнă.

Çавăн пекех Ойкас йалĕнчи кулак ывăлĕ Леонтий Лукин декабĕрĕн 3-мĕшĕнче тăшманла ĕç тунă: вăл Националънăçсен Советне депутата суйлама Çĕмĕрле суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидатăн Новиков йулташăн биографине урам хушшинче чĕре-чĕре тăкнă.

Вăрнар районĕнчи халăх сучĕ декабĕрĕн 10-мĕшĕнче вырăна тухса, Андрей Етриковпа Леонтий Лукина иккĕшне те икшер çуллăха тĕрмене хупмала приговор йышăнчĕ.

Суд иглеме пынă колхозниксем халăх сучĕн приговорне ырларĕç. П. Сорокин.

Ответлă редактăр заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

ВРАЧСЕНЕ, СЫВЛĂХ СИПЛЕКЕН УЧРЕЖДЕНИСЕНЕ, АЧАСЕМПЕ ХĔРАРĂМСЕН КОНСУЛЬТАЦИЙĔСЕНЕ ПĔЛСЕ ТĂМА

Пур аптексенче ТАТА „САНГИГИЕНĂ" магазинĕсенче

РАХИТА ХИРĔÇ „Д" ВИТАМИН сутлăх пур

Витамин „Д" ачасене рахит пуласситчен хăтарат;

Витамин „Д" ачасене рахитран хăвăрт сывалма пулăшат;

Витамин „Д" ачасенне те çитĕннисенне те шăмă тавраш хуçăлнине хăвăрт сыпăнма пулăшат;

Витамин „Д" йăвăрланнă хĕрарăмсен тата кăкăр ĕмĕртекен ача амăшсен организăмĕнче тăвар улшăнуне çăмаллатат;

Витамин „Д" çынăн организăмĕнче пулса пыракан фосфорла-калъцилĕ улшăнуне йĕркелет.

ВИТАМИН „Д" препаратăн кашни серине ССР Сойузĕн Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕн Государствă витамин станцинче биологи тĕлĕшĕнчен сăнаса тĕрĕслесе кăлараççĕ.

Чăвашаптекоуправленин мĕн пур аптекĕсенче тата „Сангигийенă" магазинĕсенче Витамин „Д" ыйтăр

2—1

„Чăваш Коммунĕ" çыранса йлмели хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 972. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2601. Тираж 13790. 58—92 см. 1—7 п. л.